К 84.09(=Чув)
Я45
Ч-41276



Петӗр Яккусен

# Ҫӗн уйӑх ҫути

Национальная библиотека ЧР
4-041276

К К 84.09(=Чув)
Я 45
Обязат. экз.

*Петĕр Яккусен*

# *Çĕн уйăх çути*

Кр,

Шупашкар
2006

84(2Рос)[Чув]{6ч-5
К 84.09(=Чув) 6-5

УДК 821.512.111
ББК 84 (2Рос=Чув) 6-5
Я 49

Яккусен Петĕр. Çĕн уйăх çути: Сăвă кĕнеки. – Шупашкар: Клио, 2006. - 157 с.

ПРОВЕРЕНО
20 10 06 СЕН 2017

© Яккусен Петĕр, 2006
© Художественное оформление
Енькка Е.В., 2006

Ч-41276

...ЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

◆◆◆

Хĕвелĕ хăй те чăтаймарĕ
Хĕрте-хĕрте çут тĕнчене.
Мунча катки пек шултăркарĕ,
Кăштăрт ӳкерчĕ кăшăлне.

Пĕр çамрăк пӳллĕ йăрăс хурăн,
Яштак спортсменка евĕрскер,
Çав кăшăла çаврать маттуррăн,
Туймасăр урăх нимĕнскер.

Çут кăшăл самайччен вылянчĕ
Яш хурăн пилĕкĕ тавра.
Çулункине картса хăварчĕ
Çĕре ӳкес чухне вара.

◆◆◆

Хамашкал шăхличчĕ
Иккĕмĕш класра:
– Виç хут виççĕ – çиччĕ,
Иккĕшĕ асра.

Çитрĕ те вун саккăр,
Пурнăç хавасрах:
– Виç хут виççĕ – саккăр,
Пĕр савни асра.

Вăтăр витĕр тухрăм,
Шучĕ урăхрах:
– Виç хут виççĕ – тăххăр,
Пĕтĕмрех асра.

♦♦♦

– Пурнăç ытла та лăпкă,
Лăпкă пулсан – усал, –
Терĕ мана пĕр кăткă
Йывăç çине пăхса.

– Пурнăç ытла та хăтлă,
Хăтлă пулсан – кичем, –
Терĕ мана çав кăткă,
– Кил, эп сана тĕкем.

– Пурнăç ытла та кăткăс,
Пурнăç ытла та ансат, –
Терĕмĕр иксĕмĕр лăпкăн,
Йывăç çинчен ансан.

*И.А.Андреев профессора*

Пурна киле хуллен, тен, манěç
Тахçан эпир пурăннине,
Кěнекесем те канлěн канěç
Ёмсе архивăн тусанне.

Пуян вилсен юлать тет мулě,
Ыр çын вилсен юлать тет ят.
Эпир вилсен мěскер-ши юлě?
Чěлхе-и? Юрă? Хушамат?

Мěн-мěн юлассине пěлместпěр,
Сисет пек чи шалти хěлхем:
Яланлăха юлать пěртен-пěр
Вěрентекен... Вěренекен...

Вěренекен кайран вăл пулě
Теприншěн хăй – Вěрентекен,
Çак çеç чăн Чěрěлěхěн çулě,
Чăн пурнăç тупсăмě те, тен.

Эппин эп пуçăма таям-и,
Сума суса чěркуçленем,
Хитре сăмах нумай каламăп:
"Тавах сана, Вěрентекен!"

♦ ♦ ♦

Атте ман пулнă çĕнтерӳçĕ,
Анне ман пулăшнă тылра.
Çуралнă эпĕ вăрçă хыççăн,
Ытлах курман хура-шура.

Пĕлетĕп: вăрçă – кун сӳнтермĕш –
Çын вĕлерсе те çырлахман,
Анне кăкрин сĕтне пĕтернĕ,
Чăмлак хыптарнă çуралсан.

Пĕлеп: вăрçин мĕлки те вăрăм,
Мана та лекнĕ сулхăнрах,
Сăпка çакма пулман тет вырăн,
Эп ӳснĕ тет сăпкасăрах.

"Эпир чухне..." – тесе мухтанмăп,
Сăлтавĕ çук та мухтанма:
Ун чух манра пулман та айăп,
Анчах сăваплăх та пулман.

Пурнăçăма виçетĕп, виçĕп
Мĕн тунипе паян, ыран...
Атте ман пулнă çĕнтерӳçĕ,
Анне ман пулăшнă тылра.

◆◆◆

Ӳкнишĕн çăлтăр – çăлтăрсем сӳнмеççĕ,
Килнишĕн кĕр – пушхирленмест çаран.
Çаран çинче ман сăввăмсем ӳсеççĕ,
Сапаççĕ пĕрчĕ çăлтăрсем таран.

Пулмашкăн урăхла та пултарать-и?
Тăкас-им вĕççĕр тунсăх куççульне?
Çĕр тĕнĕлĕ хăрушшăн хуçăлать-им
Килнишĕн çĕр çине сив кĕркунне?

Эй, çук! Хĕвел пурнать. Эппин пурнатăп.
Ан тив, хĕле чăтмашкăн чĕр асап.
Çĕн çуркунне валли вăй-хал пухатăп,
Юр айĕнче шур шухăш упраса.

Ăшша тухсан, хитре-хитре иркӳлĕм,
Чун кĕрĕ шурă шухăш папкама.
Мухтатăп пурнăçа! Эп мухтăп ӳлĕм!
Çĕр тĕнĕлĕ ан хуçăлтăр кăна.

◆◆◆

Кашласа килсе кӗҫӗҫ кӗрхи сив ҫилсем,
Тӗксӗмленчӗ тӗнче, тӗксӗмленчӗ.
Хурланса тӗссӗрленчӗҫ ытти йывӑҫсем,-
Вӗрене ҫеҫ илемлӗн хӗмленчӗ.

Кӗрхи тунсӑх яланлӑх пырать пуль тесе
Ик куҫран эп куҫҫулӗ тӑкам-и?
Ав, ларать вӗрене, тӗрлӗ тӗслӗн ҫиҫсе:
Асамат кӗперне упраканӗ!

Ӳкчӗр, ӳкчӗр кӗрен те хитре ҫулҫӑсем,
Ҫӗр ҫинче ҫӗн кавир эрешлентӗр.
Юлашки вӗрене те тӗртсессӗн илем,-
Нихӑҫан та ҫӗр юлмӗ илемсӗр.

Хӗллехи шартлама сивӗсем иртейсен,
Ҫӗнӗрен ҫут ҫанталӑк вӑранӗ.
Вӗрене ҫулҫинче сывӑ юлнӑ тӗссем
Улӑх ҫийӗн чечеклӗн саланӗҫ.

Тӳпере йӑлтӑрсассӑн ачаш асамат,
Вӗрене ҫулҫине пурте манӗҫ.
Улӑхра вылякан хӗр ача ҫеҫ — самант —
Тем ӑнланӗ те — кӑшт салхуланӗ.

◆◆◆

Ачаллах ăсталанă тĕнчеçĕм,
Ĕмĕтри сарă кунăн тĕнчи!
Çĕр чĕтренне пек ишĕлтĕн эсĕ,
Çĕтрĕн пурнăçăн тăр çутинче.

Çук иккен юмахри пек асамлăх,
Çук иккен ĕмĕтри çут хула,
Кĕп-кĕрен пĕлĕтсем те çухалнă,
Тăрса юлнă иккен хыçала.

Уссăрах ĕмĕтленнĕ теместĕп,-
Эп вĕрентĕм илемлĕх курма,
Уссăрах ĕмĕтленнĕ теместĕп,-
Эп вĕрентĕм илемлĕ пулма.

Сар тĕнче арканнишĕн йĕместĕп
Хуратса хура мар пурнăçа:
Хăнăхатăп халь ĕнтĕ теме те,
Хăнăхатăп куна та каçа.

Йĕксĕке хăнăхса çитейместĕп.
Тӳсейместĕп суеç куллине.
Урăхла пурăнмашкăн пĕлместĕп,
Урăхла пурăнас та килмест.

◆◆◆

Кăвар çинчи кăвак пек çунтăм
Кун-çулăн вут-кăвайтĕнче:
Халь-халь тумлас тумла пек чунăм,
Халь-халь ўкес пекех тĕнче.

Мĕскер вăл пурнăç вут-кăвайчĕ?
Тĕнче ан ўктĕр кăвайта,
Тен, пĕртен-пĕр тумла хăвачĕ
Кăшт çитеймест чарма вута.

◆◆◆

Каллех ак тепĕр йĕр сăн-питĕмре,
Хитре арçын тесе никам калаймĕ.
Савсассăн, пĕркеленчĕк те хитре,
Савни, ăна кун-çулăм сухаланă.

Çĕлен-калта пек шăвăнас килмест,
Йăпăлтатас килмест – чуна упратăп;
Асаплă парăнманлăх илемне
Яка сăнпа, чунпа ылмаштармастăп.

Эп паттăр мар. Ахаль кăна этем,
Анчах юнра – асаттесен пăлхавĕ,
Ăна ылмаштарас, чарас тесен,
Атте-анне те, чăнлăх та çухалĕ.

Упрантăр чăнлăх – пĕртен-пĕр хĕвел.
Каçар, савни, телейлĕ тăвайманшăн,
Ĕнсе çинчи çу хулăнăш телей
Çырлахтарманшăн.

◆◆◆

Ялтăрти пурнăç тинĕсĕ – анлă,
Эс ăна питĕ савнă, юратнă...
Тĕнчере тĕп пулман чингисханлăх!
Вăл сана чура чунлĕ çуратнă!

Ирĕкре, тинĕсре ишес туртăм
Пурпĕрех чунунта сан упраннă.
Вăй çитертĕн – куç уçрăн та – куртăн:
Тĕнчере тĕп пулман чингисханлăх!

Аллунта, мăюнта сăнчăр çук та,-
Чунунта илтĕнет чăнкăртатăвĕ...
Çут тĕнче сансăрах пулнă çутă,
Сан валли – сĕмлĕхри сăнчăр татăкĕ.

Ху та эс – сăнчăрне татнă анчăк,
Ирĕке тухнăскер, йăлт арпашнă:
Айăпа кĕнĕ евĕр, вăтанчăк,
Сăнчăрна сĕтĕрсе – таврăнасшăн...

◆◆◆

Пурӑнатпӑр, кун куратпӑр,
Каҫ куратпӑр – кайиччен...
Шанчӑка сӳнме памастӑр,
Сӑввӑмсем – сар кайӑксем.

Эп сире ҫунатлантартӑм
Тӗркӗшӳллӗ тӗнчере,
Хӳтлӗх вырӑн тупса патӑм
Сад пахчиллӗ чӗрере.

Халӗ – вӗҫӗр, кайса ларӑр
Ырӑ чунлисем умне.
Йывӑр шухӑша хӑвалӑр,
Хитрелетӗр тӗнчене.

Эп – сар кайӑка тус турӑм,
Леш – кӗлтӑвӗ ҫӑхана...
Эс – чунна кура – мӗн суйлӑн,
Ҫавӑ пырӗ сан умна.

♦♦♦

Ир учĕ тĕтрелĕх ĕçĕ,
Кăвак кайăксем вĕçĕç, –
Атя, çывăрмастпăр кĕçĕр.

Эпир чăнлăха çухатнă:
Пире юрату тухатнă,
Кĕтме хĕвеле тухатпăр.

Атя, çывăрмастпăр кĕçĕр:
Сăрт çийĕн шевлелĕх çиçĕ,–
Курмашкăн атя, савниçĕм.

Кăвак кайăксен çуначĕ.
Тĕтре ĕçекен ир учĕ.
Ик чун умĕнчи шуçăм.

◆◆◆

Урампа утса иртем те, –
Манса кайӗ терӗн-им?
Урамсем умра, ай, тем чуль:
Утайса пӗтерӗн-и?

Хуласем сана тухатӗҫ,
Илӗртӗ сивӗ ялтравлӑх...
Эпӗ урама тухам та,
Пӑхса юлӑп – асӑнмалӑх.

Юлӗ ӗмӗре паянлӑх.
Шӑп пӗр ӗмӗр эсӗ иртӗн
Чунӑм витӗр. Пурӑнмалӑх
Вӑй-хӑват, сипетлӗх кӳртӗн.

Юрату мӗнне пӗлмесӗр,
Тен, пӗрре куҫҫуль кӑларӑн...
Ҫӑлтӑрсем ма илӗртеҫҫӗ?
Ман марришӗн.
Манӑн мар эс.

◆◆◆

Эй, çутă çанталăк!
Йăлтах эс пĕлен-тĕр,
Йăлтах эс куран-тăр эпир курнине...
Савмасăр ӳстернĕ чечек пек илемсĕр,
Куççульлĕ те тĕксĕм кăçал çуркунне.

Çапах калчасем туртăнаççĕ шăн витĕр,
Çапах таврăнаççĕ килне кайăксем,
Çапах чăтайса тӳсеймерĕ те кĕçĕр
Куç уçрĕ шур çĕмĕрт.
Ăçтан вăй илсе?

Качаллă, чĕрмеклĕ,
Хĕрхевсĕр çурхи шăн.
Пыратăп, ав, эп те пăрлак çийĕпе.
Мана эс маннишĕн, сана эп маннишĕн,
Çурхи кун сиввишĕн те айăплă пек.

Ч-41276
Национальная библиотека Чувашской Республики

* * *

Ӑҫта каян, чӗкеҫӗм?
Чӗкеҫ ниҫта та каймасть.
Пӗлӗтсем аркине чӳхеҫҫӗ
Тахҫанхи пӗр пике майлах.

Ҫав пикен куҫӗсем – ҫиҫетчӗҫ,
Куллисем те – ялтравлӑ шевле.
Чӗкеҫсем ҫӗмренле вӗҫетчӗҫ
Аялтан – ҫӳлелле!

Ҫеремленнӗ чӗкеҫ сукмакӗ,
Качча кайнӑ пики те халь.
Тӳпене чӗкеҫсем тухмаҫҫӗ,
Ҫӗтнӗ – ҫуклӑха.

Пӗлӗтсем ҫаплипех чӳхенӗҫ,
Асилтерӗҫ ялтра яшлӑхна.
Пикисем, тен, мана кӳренмӗҫ...
Чӗкеҫсем – ӑҫта?

◆◆◆

Чӳрече умӗнчи мальвӑсем
Ӳссе кайрӗҫ тӑрук, сисеймерӗм,
Пӳрт ӑшне тинкерсе пӑхнӑҫем
Варкӑшпа сулланаҫҫӗ пӗрерӗн.

Ҫут тӗнчен пирвайхи тӗсӗсем –
Чечексен пурӑнаслӑх саманчӗ –
Чӳрече витӗр сӑрхӑннӑҫем
Йӑлл кулса ҫеҫ ачам вӑранчӗ.

◆◆◆

Эп тахçан пĕр хĕре ăсатсаттăм:
Шавлă клуб çумĕнчен иртсен,
Такамсен тутлă шăршлă сачĕ
Çавăрттарчĕ пуçа ирччен.

Халь сăнне те ятне – астумастăп.
Манăçа тухнă мĕн тенисем.
Асăмра мĕн пурри – калас-тăк:
Пит эрешлĕ хапхаччĕ вĕсен...

◆◆◆

Тӳперен анать-и хура ҫиҫём?
Чӗрӳне ҫурать-и ҫурмаран?
Ыттисем пек харсăр пулманнишӗн,
Кăмăлу ҫемҫишӗн ан кулян.

Ҫӗр ҫине ӳксессӗн те хура тăм,
Ҫеҫкӳсем шаннишӗн ан хурлан.
Пурнăҫна чуну варне эс хур та
Ҫуркунне илемлӗхне упра.

Йăлăхтарӗ чунсăрлăх тискерӗ,
Туртăнӗ этем – этем патнех...
Юратулăх, кăмăллăх чиперӗ
Илемлетӗ сивӗ ҫӗр питне.

Ҫав самантшăн эсӗ чăмăртаннă,
Сӗмлӗхре упратăн илеме.
Ыттисем?
Эс – урăхшăн ҫуралнă.
Ан пăхсам эппин ыттисене.

◆◆◆

Санпа калаçрăм эп харсăрланса,
Малтанхиллех, ача чухнехиллех...
Ик куçунтан куççуль юхса ансан,
Эп курмăш пултăм çутă куççуле.

Эп курмăш пултăм. Сисрĕ-çке чĕре.
Вăл тапрĕ хыттăн-хыттăн, çĕнĕлле:
Мĕн йӳтĕмпе çак хĕр ача йĕрет?
Мĕн-ма йĕрет вăл пит хĕрхенмелле?

Çĕр тĕрлĕ ĕмĕт, пин пĕлми ыйту
Тата пĕр хĕр ача тăрать умра...
...Çапла килет пĕрремĕш юрату
Илсе кайма пире ачалăхран.

Илсе каять те – ĕмĕр тăршшĕнче
Асра юлмалăх чĕрене кĕрет.
Ачалăхпа шух яшăх хушшинче
Сăлтавсăрах пĕр хĕр ача йĕрет...

◆◆◆

Шап-шурă, шап-шурă, шап-шурă...
Виç утăмлăх юлчĕ тĕнче.
Тĕтре пĕтĕмпех айне турĕ,
Шалта, ăшĕнче – эп пĕччен.

Çӳрерĕм, çӳçентĕм, çухалтăм
Тĕтре ăшĕнче ирччен.
Ăçта эс, хĕвелĕмçĕм-ылтăн?
Шăтар çак çăра тĕтрене.

Килсем, уçă çил кассăн-кассăн,
Тĕтре ултавне сирсе яр, –
Тахçан эп ăна кăмăллаттăм,
Мана килĕшет халь уяр.

Хĕвелĕм те çилĕм! Тархасшăн,
Ан парăр çынна çухалма...
...Алпа çунатла эп кармашнă,
Утатăп сире тĕл пулма.

♦♦♦

Хура хĕвел хуллен сӳнет,
Сĕрĕмленсе ӳкет çеç кĕлĕ.
Алла тăсатăп тӳпене, –
Пӳрне вĕçне килет çеçкелĕх.

Калла пăхатăп çаврăнса,
Выртать унта инкек амакĕ,
Çĕлен пекех авкаланса,
Асапланать хыçри сукмакăм.

Хĕнпе тасалнă сукмакпа
Утса тухать ылтăн пăланăм.
Пĕрле каяр-и юмаха?
Пыратăн-и пĕрле, тăванăм?

Тискер этем – хăйне шанать,
Ыр çын – çыннах-çке ĕненесшĕн!
Паян хура хĕвел анать,
Атя сар хĕвеле кĕтмешкĕн.

♦♦♦

Таврӑнассӑм ҫукчӗ хам уҫланкӑна,
Пурӑнассӑм пурччӗ тус-тӑванпалан.
Кам мана хаваслӗ? Йывӑҫсем кӑна.
– Сывӑ-и, юманӑм! Сывӑ-и, палан?

Сывӑ-и, шур хурӑн – чунӑм юратни,
Сывӑ-и, ҫӑкаҫӑм – тӑванах анне...
Ҫын пулса ҫуралтӑм, вӑрманта – ратне,
Вулаймарӑм пулӗ Турӑ ҫырнине?

Шурӑмпуҫ килсессӗн, унӑн ҫутине
Чунӑмра упрарӑм, чӗртрӗм шӗл кӑвар,
Ҫынсене сӗнесшӗн пултӑм чун вутне, –
Шурӑмпуҫ ҫути те, эп те – кирлӗ мар.

Йӑсӑрланчӑк пурнӑҫ. Тӗссӗр самана.
Йывӑҫсем ҫынран та чунлӑрах пулсан,
Таврӑнатӑп эпӗ хам уҫланкӑна...
– Сывӑ-и, юманӑм! Сывӑ-и, палан!

◆◆◆

Ирхи шăплăх çӳçенсе
Çырма çийĕн юхрĕ...
Тул çути папкисенчен
Кăвак çулçă тухрĕ.

Çак сăваплă самантра
Юрланмарĕ юрă,
Пăшăлтатрăм хам ăшра:
"Çут çанталăк – Турă..."

Кăвак çулçă хушшипе
Панулми пек хĕрлĕн
Пурăнаслăх нушипе
Курăнчĕ хĕвелĕм.

Хура каç çĕленĕсем
Вар тĕпне пытанчĕç,
Тул çути çеçкеленсен
Тамăкра путланчĕç.

◆◆◆

Кĕмĕл çутиллĕ хирсем – савăнмалăх...
Хыт юр çийĕпе – кайăп...
Çав тери çутă та çав тери тăлăх
Тата çав тери лайăх.

Пур ман пĕр ĕмĕрлĕх ырлăхăм-ырлăх:
Виçесĕр инçет хĕмĕ.
Савăкăм-савăкăм, хурлăхăм-хурлăх, –
Телейĕм çапла: чĕмсĕр.

Ывăнтăм эп.
Çураçулăх шырарăм
Çынсем хушшинче. Ыртăм.
Эсĕ яланлăх мана çупăрларăн,
Хирсем ялтăрни – ылтăн.

Куçăм курать-ха çакна: пурăнатăп!
Туятăп сана, хирĕм!
Çав тери çамрăк та çав тери ватă
Тата çав тери ирĕк...

♦♦♦

Ăш кӳтсе çитсессĕн, тĕттĕм хуçисем
Çĕр çине ярсассăн элчĕ пек эсрел,
Улмуççи çеçкийĕн кĕрен çутисем
Чунăма кĕреççĕ – чунăм пĕтесрен.

Ĕнтĕ куç ӳкеймĕ! Тухату – витмест!
Шевлепе шевле çеç вăрттăн киленет.
Çав çутта шансассăн, шанчăку сӳнмест,
Сĕмлĕх ăшĕнче те вăл çеçкеленет.

Çав кĕрен çеçкелĕх! Сывлăм сырнăскер.
Çав ăшри вĕрилĕх! Турă панăскер.
Ма ухмахланатпăр? Çын ĕмри – кĕске.
Кĕрен çутă пур-и? Тата – мĕскер?

◆◆◆

Çĕрлесерен шăпчăк юрри
Янрать, анчах та – илтĕнмест.
Уçăлакан чечек варри
Тĕс илеймест – тĕксĕмленет.

Илĕртӳсем нумай. Сыв мар
Тĕнче çинче ултав çиçет.
Пире нумай та кирлĕ мар, –
Кам та пулин савсан – çитет.

Хĕвел çеçки чуна тымар
Ярсассăн – килĕ кун!
Пире нумай та кирлĕ мар, –
Чечеклĕ пултăр чун.

◆◆◆

Кĕркунне. Купăста каснă вăхăт.
Сывлăш – пăр пек – таса.
Пахчана васкамасăр тухăп
Хампа хам калаçса.

Акă çу иртсе кайрĕ, тейĕп,
Шăн çĕр çийĕн утса.
Юлашки панулми пат! ÿкейĕ
Шухăша татса.

Ан кулян вăхăт час иртнишĕн,
Пурăнни – паха.
Кăвакарнă юманлăх çийĕн
Ăраскал пăхать.

◆◆◆

Юпаланать хура тусан
Тӳпе тăрне те вараласшăн, –
Сăмах купи айне пулса
Мĕн чухлĕ çын суккăрланмасть-ши?

Сăмах вăл – Турă – Библире...
Ай-яй, шуйттанĕ те сăмах-мĕн!
Çĕр-шывăм кайрĕ хĕн чире,
Çăлас тесен те – çăлаймастăн.

Çăлма пултарăн чунна çеç.
Лăплантарни те халь – суялăх.
Çапла пĕтет иккен тĕнче.
Тĕнче пĕтет. Тĕнче çуралĕ.

♦♦♦

Сёмлёх ăш-чикĕ: çитмĕл çич тĕслĕн
Чăн варринче çеçке ешерет...
...Ĕмĕт сӳнеслĕн, ĕмĕр иртеслĕн, –
Эпĕ йĕместĕп, чунăм йĕрет.

Çав илеме курма ĕлкĕрмеслĕн...
Сĕмлĕх.
Ма вăхăт: вупкăн-çĕлен?
Ма сăмахсем суя хĕреслĕ?
Эпĕ пĕлместĕп, чунăм пĕлет.

Пур! – варринче – çитмĕл çич тĕслĕ
Чăнлăхăм, Туррăм – пур! Вăл кĕтет:
Çын – хăйĕнчи сĕме çĕнтерсессĕн,
Хăй кайма тухнă çĕре çитет.

Эпĕ сисместĕп, чунăм сисет...

♦♦♦

Ырсассӑн ырлӑх хыççӑн çӳресе,
Те хамӑн çылӑхлӑ чуна çӑлмашкӑн,
Тӳпе тӑрне эп касрӑм чӳрече, –
Кӑвак хуппи карӑнтӑкне уçаслӑн.

Çӳлтен-çӳлтен сенкер шевле юхать.
Çак çӗр çинчех утса çӳреп пулин те, –
Сар кайӑкӑм урӑхларах юрлать,
Урӑхларах пек çут тӗнчемӗр инçӗш.

Туятӑп ӳкнӗ сулçӑ асапне,
Çӑвас юрсен тасалӑхне туятӑп...
...Ай, ӑнтӑлап та савнӑ чун патне –
Чул стенана лексе! ӑнран каятӑп.

◆◆◆

Çырлахтармарĕ умăнта пурри, –
Шырарăн тĕнче тупсăмĕ, хуравĕ...
...Сана тухатрĕ çӳллĕ ту тăрри,
Ту тăрринчи куçа шартан ялтравлăх.

Салхуллăскер – хаваслăх хушшинче –
Шухăшлăскер – тĕнче айванĕ тейĕн! –
Эс çăртăн, çăртăн пылчăк çĕр çинче,
Чуну çӳрерĕ шур ялтравлăх çийĕн.

Ху кăмăлна эс тупрăн ак тинех!
Ту тăрринчи таса ялтравлă пăрлăх
Сан телейӳ те çĕр-шыву. Мĕнех?
Ан ӳпкелеш. Ширанă – тупнă пурлăх...

Пӳлĕх патне мĕн чухлĕ çывăхрах,
Эс çавăн чухлĕ ху та юрăланăн...
...Юрлаттăм теттĕн чун салхуллăран,
Эс мар, эс мар – сан Пӳлĕхӳ юрланă!

* * *

Куç уçать, савăнать... таптанать чечек.
Ирĕкре чупас чух – тихана кӳлеççĕ...
Эпĕ çеç – авалхи кĕнеке тупнă пек,
Тăр-пĕччен – малаша – вуласа пĕлеесшĕн.

Эпĕ çеç – каçхи кӳллĕн хаш сывлăшĕ пек,
Кӳлĕ çиййĕ пекех – пит аманчăк романтик...
...Хĕрхенетĕп сире, малаша пĕлнипе,
Тур каçартăр сире, çын тени каçармасть-тĕк.

Çĕн тĕн мар – пуласси, вилĕм мар – пурнасси
ПУЛĔ! Кайăк хур ман ята салам янă:
Чăтма пултăн – чăтсам! Тулĕ çутăласси
Инçех мар, инçех мар, ак часах кăваклане...

◆◆◆

Ман иртнĕ кунăмсем
Тăри юрри пулса,
Асамлăха савса,
Ачалăхран юхаççĕ.

Ман иртнĕ кунăмсем
Кăвак çеçке пулса,
Асран шăтса тухса,
Çилпе сулкаланаççĕ.

Паянлăх кунăмсем
Каç евĕр туйăнсан,
Хама шанми пулсан, –
Вĕсем çăлма килеççĕ:

Ман иртнĕ кунăмсем!
Ача-пăча пулса
Чĕрне вĕçне тăрса,
Чӳречерен пăхаççĕ.

◆◆◆

Айăплатпăр пĕр-пĕрне:
Эс ун пек те эс кун пек...
Юрату пархатарне
Упраса хăварас пек.

Кулленхи тĕркĕшӳре,
Хирĕçӳллĕ шăв-шавра
Ырчĕ пуль çӳре-çӳре...
...Кайрĕ вăл – ыйтмасăрах.

Килнĕччĕ – ыйтмасăрах:
Пит ачаш, аманчăкскер.
Халĕ айăп ан шыра,
Иксĕмĕр те – шанчăксăр.

♦♦♦

Сăпайăн, сап-саррăн
Çунать кĕр кăварĕ...
Пĕлетĕп – каçармăн
(Тен, Турă каçарĕ?)

Юман хăмăрланнă,
Пилеш йăмăхланнă.
Сана эпĕ манмăп, –
Анчах – кĕр пуçланнă!

Кĕрхи юратулăх
Хĕрхевлĕн çутатрĕ.
Сăвап-ши? Тен, çылăх
Сукмакăма татрĕ?

Вăрман. Эп тăратăп.
Çунать кĕр кăварĕ.
Эп – çĕтнĕ. Хăратăп!
(Тен, Турă каçарĕ?)

◆◆◆

Сарӑ ҫулҫӑ пулнӑ сӑмахсем,
Халь вӗсем ниме те пӗлтермеҫҫӗ.
Эпирех ӗненнӗ чӑнлӑхсем
Кӗр вӑрманӗнче вӗлтӗртетеҫҫӗ.

Ӳкнӗ ҫулҫӑ айӗнче кӑна
Тем мӑраннӑн хуралса хускалнӑн...
Ҫут тӗнчи ҫапла. Ан вӑрҫ ӑна, –
Тӑрӑшсан та – ним ӑнлантараймӑн.

Эсӗ мар, этем, тӗнче варри,
Эсӗ мар – тӳпе тӗкӗлекенӗ.
Ӳкнӗ, типнӗ сӑмахсен сарри, –
Ҫавӑ ҫеҫ сана йӗкӗлтекенӗ.

♦♦♦

Турӑ ҫырни ҫапла вуланчӗ-шим?
Пӗр ҫын – тӗнче, тӗнчи унпах пӗтет...
Упаҫырми – эс ман Иерусалим,
Патшалӑхӑм та тӗп хулам. Тӗн те.

Тӗнчем варри. Вӗҫсе каймалӑх – сӑрт.
Ӳкмелӗх – ҫӗнӗ утӑ сарнӑскер...
Чи аслӑ храм – ҫуралнӑ, ӳснӗ ҫурт...
Йӑлтах, йӑлтах ман пур. Тата мӗскер?

Тата мӗскер ҫитмест ӗнтӗ ҫынна?
Ҫитмест – ҫӳретпӗр ҫут тӗнче касса.
Пин хут кайса, пин хут тавӑрӑнма,
Пин хут манса, пин хут тытма асра.

Сӗмленчӗ. Лартӑм пӗрене ҫине.
Шупка сенкеррӗн уйӑх ҫутатать...
...Итлесчӗ шӑпчӑка ҫак каҫхине,
Ун юррине йытӑ вӗрни хуплать.

♦♦♦

Ай, пурӑнмалӑх вӑй юлмарӗ!
Хӑш йывӑҫран-ши уртӑнам?
Ҫунса чӗнет пилеш кӑварӗ,-
Усаллӑхран тасатакан.

Ачалӑхра тӗрев шыратӑп...
Анчах эп чупнӑ ҫарансем
Шыв тӗпӗнче халӗ выртаҫҫӗ,
Шыв ҫийӗнче – хура хумсем.

Е яшлӑхра тӗрев шыратӑп...
Унта – кӗрен тӗтре-тӑман.
Эп яшлӑхӗшӗн макӑрмастӑп,-
Пит шел кӗренсӗр юлнӑран.

Те ҫавӑнпа чӗреҫӗм пушӑ.
Хама ҫухатрӑм (мӗн тӑвар?)
Пилешӗмрен тытас – хӑрушӑ.
Пилеш таса вӑл – эпир мар...

♦♦♦

Утă çулнă вăхăтри
Улăх сывлăшĕн шăрши,
Шурă хурăнăн кăтри,
Çуллахи таса çĕр-шыв, –

Тав сире!
Унтан ытла
Тав тăвам сукмакăма,
Çыр хĕррин хутлам-хутлам
Тăсăлса выртакана.

Кĕркунне пейзажĕнчи
Тунсăх витĕр тухрĕ те,
Ыталарĕ çу тĕнчи,-
Ай, хĕвел епле хĕртет!

Кĕркунне хыççăн – çулла?
(Хăть ĕнен, хăть ан ĕнен...)
Сăвăç çулĕ – кутăнла,
Кутăнла çĕр-шывĕ, тен?

◆◆◆

Тăнласан та – ăнкараймăн
Асилӳ асамлăхне:
Кĕмĕл-кĕмĕл шăнкăравлă
Çăварни урхамахне

Те ачалăхра эс курнă,
Те тĕл пулăн ӳлĕмрен,
Урхамах урийĕн юрĕ
Сĕртĕнет сăн-питĕмрен.

Те эс туйнă çутă ырлăх,
Кăмăл урхамахĕ пек,
Пурнăç урлă, пăрнăç урлă
Çывхарать хăй юрттипе.

Пурпĕр мар-и, пĕр тесессĕн,
Пултăр: кĕмĕл шăнкăрав, –
Çав сасса çĕтермесессĕн,
Хурлăхра та – ыр куран.

◆◆◆

Çав вăрманах. Çав уй-хирех.
Таçта илсе каян сукмак.
Ик тĕрлĕ пурнăç тĕнчере:
Кунтах вăл – тамăк та çăтмах.

Çитер хăват – хăвна çĕнме,
Сирме йăсăрлану сĕмне!
Чĕркуçленсем чечек умне
Чунна чечек пек ӳстерме.

Йĕри-тавралăх сăнĕ пек
Пултартăр сăнăм канăçма,
Сасартăк уйăх курнипех
Сăмахсăр, лăпкăн тăнăçма...

Çав çутă пек сăвапланма
Çитер хăват-мехел хĕмне.
Вăрман. Сукмак. Уй-хир. Сукмак.
Шыратăн эс Тăван Киле.

♦♦♦

Kaç пулассине кĕтеттĕм,
Кун иртетчĕ пит вăрах...
Сансăр пурнаймастăп теттĕн,
Пурăнатăн – мансăрах.

Халĕ – каç нихçан пĕтмеслĕн,
Ыйхă – вĕçнĕ çуклăха...
Пур-и юрату? Пĕлместĕп.
Ма хĕвелĕ хăть тухмасть?

Кăвак çутă халь килинччĕ!
Пăхса тăрăп кантăкран,
Е мĕлке-тавраш иртсессĕн,
Эс пуль, тейĕп, антăхса.

Сивĕ. Нӳрĕ. Кансĕр. Тĕттĕм.
Явăнать анра-сухра.
Сансăр пурнаймастăп, теттĕм,
Пурăнатăп – сансăрах.

◆◆◆

Çурхи шевле пуçна ĕнтĕркеттерĕ,
Тĕлленĕ тĕлĕк тăрă кăнтăрлах:
Сана вăл кĕтрĕ, эс ăна кĕтмерĕн,
Мĕн турăн эс? Пĕччен халь. Тур çырлах!

Кайман-ха юр. Тĕл-тĕл кăна кĕреннĕн
Çиçсе илсе кĕтет каяс кунне...
Эс – айăпли, апла мĕн-ма кӳреннĕ?
Сана хăвна кӳренмелле чухне?

Çурхи тумла шăтарчĕ пĕчĕк шăтăк,
Пӳрт çуммипех – тумла шăтăкĕсем.
Кӳреннĕ эс – кĕтмерĕн – ларччĕ шăпăрт.
Ларах пĕччен. Сан пур ăшă кĕтес.

* * *

Тул çути саламĕ
Вăрмана саланнă,
Чĕпписем пăхаççĕ ăш йăвисенчен.
Сывлăм çут тумламĕ
Туратран çакланнă,
Çеçкесем çинчен те çулçă вĕçĕнчен.

Шурăмпуç хăвачĕ
Çемĕсем хывтарĕ,-
Çĕнĕ кун илемĕ! Ах, сана кĕтни!
Кивĕ тунката çеç
Шарламасăр ларĕ...
(Вупăрсем пытаннă унăн шăтăкне).

◆◆◆

Ак ӳтленчӗ хура кайӑк
Самана ҫӑмартинчен,
Сӑнаса ларать куҫ айӗн
Ҫӳллӗ хурама ҫинчен.

Курӑк ачашпа шӑтать-и,
Е чипер чечек тухать,
Е кушак ҫури чупать-и,
Е кулса этем утать, –

Йӑлт курать ҫав ҫӑткӑн кайӑк,
Куҫ ӳкет чӗр пурнӑҫа...
Тӑрмашатӑн: пултӑр лайӑх,
Пӑхӑсӑн та: йӑлт усал.

Пурте эпӗр вараланнӑ,
Сӑн-питре – ҫунат мӗлки.
Кайӑкӗ ӑҫтан-ши аннӑ
Тӑранма та пӗлменскер?

◆◆◆

Тĕнче тени арканнă чух
Ĕмĕтсĕрри ултав сутать,
Эс – акана хастаррăн тух:
Мĕскер акатăн – çав шăтать...

Сӳнме ан пар мал ĕмĕте
Вара йăлтах йĕркеленет:
Нушу йăшать, тертӳ пĕтет,
Шуйттан кăвайчĕ кĕлленет.

Эс килнĕ – пурăнăç пама
(Хаяр – ахаль те – пит нумай!)
Тухать хĕвел саламлама,
Санпа пĕр шухăшлă пулма.

Тăм тăвайккиллĕ çĕр-шывра
Ниме пăхмасăр – ĕç ĕçле!
Мĕн илĕртет? Кам йыхăрать?
Эс – никама та ан итле...

◆◆◆

Савăшу варкăшлать шухăша,
Чиперленчĕ чĕре.
Пуçăма пусакан пуслăха
Юрату çеç сирет.

Мĕн тери пит хитре юрăсем –
Юрату юррисем –
Хыврăм пуль, тунсăхпа тĕмсĕлсе,
Тăр-пĕчченçĕ юлсан.

Чун вĕçет шăпчăксен çулĕпе,
Çул çинче – эпир.
Куçăхас пек, сăмах чĕннипех,
Çавăнпа – чĕнмĕпĕр.

Шăпчăк çулĕ выртать инçене...
Тин ăнлантăм: ма – каç?
Каç мĕнне пĕлеймен тӳпене
Çутă çăлтăр тухмасть.

◆◆◆

Кун-çул керменĕ пулчĕ тайлăк...
Кермен-ши вăл? Е чун тĕрми?
Те юр, те ырату, те айăп
Çăвать, çăвать чарна пĕлми.

Çак самантра çеç антăх-ирĕк
Кĕрет кашни çӳç пĕрчине,
Пĕр пăхăнма вĕрентнĕ чирĕм
Ăшран тасалнă пек тинех...

Юр çунăçемĕн – пĕлейместĕп:
Те уçлăхра, те çĕр çинче...
Çак тĕнчене ман килмеллеччĕ,
Тен, иртнĕ ĕмĕр варринче?

Тен, çитесси килпетлĕх парĕ
Ман пек ăнман этемсене?
Керменĕме савса пулмарĕ,-
Савам-и юр хĕвĕшнине?

◆◆◆

Хавшать те малашлăхăн йăлтăр кĕрнекĕ, –
Вара, çывхарсан пушă сĕм çывăхнех,
Аçу, аслаçу юррине ĕнĕрлетĕн
Ăш вĕçнĕ чухне, тăн арпашнă чухне.

Хыçри ĕмĕрсен, кун-çулсен чун сĕткенĕ
Çеçке кăларать паллăмарлăх ăшне.
Телейсĕр эп темĕп, тĕревсĕр эп темĕп
Манра çак çеçкелĕх упраннă чухне.

Çапла айкашать пуль садри улмуççи те
Турачĕ сарай стенине тăрăнсан:
Сĕткен таппиневаскатса вулă витĕр,
Ытти туратсен тĕрекне вăйлатса...

♦♦♦

Мĕлке пек çӳренĕ чух
Çынсем хушшинче,
Кукăр-макăр манăн çул
Тăсăлчĕ инçе.

Чун хуçмасăр – ут та ут
(Йăвашрах пулар...)
Тĕнче мар пире çич ют,
Хамăр та – ют мар.

Мĕлке пек эп терĕн-и,
Вăй-халу пĕтсен?
Сукмакна кам тĕвĕлерĕ,
Çавă мĕлке, тен?

◆◆◆

Пĕр выртса йĕрсе ярамччĕ –
Арçынна шеп мар...
Ешĕл пулнă ман çарансăм
Ёнтĕ ешĕл мар.

Путене канаш памарĕ,
Шарламасть чечек...
Айăпли камне шырам-и
Тӳре-шара пек?

Сăвăçа тӳре пулмашкăн
Ёмĕрне хушман.
Тӳрисем – турă пуласшăн,
Эп – çветтуй та мар.

Пĕртен-пĕр суран чĕреçĕм
Хальлĕхе тапать...
Ешĕл пулнă ман çарансăм
Хӳхлеме ыйтать.

♦♦♦

Чӳлмекри чечек хитре,
Улӑхри татах та...
Ҫил-тӑманлӑ ӗмӗтре
Юр ҫеҫки тататӑп.

Эп татмастӑп – тӑкӑнать
Ҫул, кун-ҫулӑм ҫийӗн...
Ҫил-тӑманӑм, тав сана!
Тав, ҫеҫкем-телейӗм!

Тулашри тӗнчемӗрте
Эп телей шырарӑм,
Телейсем иккен пирте, –
Тин ҫавна чухларӑм.

Ҫил-тӑманӑм ӗмӗт мар,
Ӗнтӗ – манӑн пурнӑҫ.
– Турӑҫӑм, ырӑлӑх пар! –
Темӗп текех йӗрмӗш.

– Турӑҫӑм, ялан пулсам!
Ан пӑрахчӗ, Туррӑм...
...Хамӑрта телей тупсан,
Ҫил-тӑман та ырӑ!

◆◆◆

Тасарах ҫӑлтӑрсен мерченӗ,
Ҫӑмӑлрах пуҫ ҫине ӳкнӗ хуйӑхӑм,
Мӗншӗнне пӗлейми: черченнӗн
Кӑмӑллатӑп сана, ҫурла уйӑхӗ.

Сан яту та сӑваплӑ: август!
Ҫу ӑшшин юлашки юратӑвӗ,
Юлашки ҫепӗҫпе ачашлан кӑшт,
Сырса илӗ часах хура пӗлӗт.

Кассӑн-кассӑн килет-и ҫилӗ,
Панулми тӑкӑнать шӑпӑр-шӑпӑррӑн...
Ман пуласчӗ сан пек – тӳсевлӗ,
Кӗрхи умӗн пулин те – ырӑллӑ.

Ҫурла уйӑхӗ! Туйӑм ӗҫченӗ!
Савӑкрах пуҫ ҫине килнӗ савӑкӑм,
Тасарах ҫӑлтӑрсен мерченӗ,
Уҫӑрах пек умри телей алӑкӗ...

◆◆◆

Вăхăт иртсессĕн йăлтах майлашать,
Вăхăт иртсессĕн тинех тĕшмĕртетĕн:
Çирĕппĕнрех-мĕн пăхас малаша, –
Сӳрĕклĕх ырă туман ĕмĕрне те...

Çĕн ӳтпелен туртăнать сурану,
Çĕн вăй-хаваллăн тулать чун-чĕрӳ те.
Пурнăç – никам чарайми çуралу,
Пур: асап хыççăн – хаваслăх черечĕ.

Ыр хутлăхна эс тухан ăнсăртран,
(Тин шухăшлаттăн: тухми çĕтсе кайнă...)
Çав хутлăхри çӳллĕ, çутă сăртран
Иртнĕ кунна та хаклан урăх майлă.

Çутă тĕнче çутăпа шайлашать.
Эс те – каллех! – ачалла тĕлĕнетĕн:
Вăхăт иртсессĕн йăлтах майлашать,
Вăхăт иртсессĕн йăлтах тĕшмĕртетĕн.

◆◆◆

Те улшăнтăм, те ватăлтăм, те урăх...
Куратăп та курман улмуççие,
Куратăп та епле вăл шурă-шурă
Таса пĕркенчĕк витнĕ хăй çине, –

Сăлтавсăрах пек хĕпĕртет чĕреçĕм,
Сăмахсăрах пек кăмăл çĕкленет.
Сăлтавсăр мар. Сăмахсăр мар. Черечĕ
Халь çитрĕ-тухрĕ пулĕ илеме.

Енчен те кăмăл çĕкленет пулсассăн,
Вăл çĕкленет пуль хĕвĕшӳ çине, –
Халиччен хи пек мар: мăнаçлăн, аслăн
Сăнатăн эс шап-шур улмуççие.

Ăсчах тени сăлтав-тĕллев тĕпчетĕр,
Политикçă вĕçтертĕр пуш сăмах,
Айван валли тухатмăш юм пĕçертĕр, –
Эс хĕпĕрте – çеçке курсассăнах.

◆◆◆

Çут тĕнче сана юратрĕ,
Эсĕ те ăна юратчĕ...
...Çил çĕклентерсе ярать те, –
Хуçăлать йăмра турачĕ.

Çаврăнса тухать тусанĕ,
Пĕлĕте вĕçет çӳп-çапĕ.
Ан куллян-ха: тăнăç анĕ,
Канлĕх килĕ, тăвăл чакĕ.

Ах, çусан та сиплĕ çумăр
Хуçăлнă турат сыплашмĕ,
Шанчăку та: хуçăк çумĕн
Çĕн папка хунав ярасшăн.

Тĕнчене эс пăтратмастăн,
Пăхăнмасть сана çил-тăвăл...
Тĕнчене юратмасассăн
Хăвна ху усал çеç тăвăн...

◆◆◆

Ăçта талпăнать-ши чунăм,
Пылак канăçа манăçса, –
Çăвать шăпăр-шăпăр çумăр...
Ларасчĕ пăхса, тăнăçса.

Çăвать шăпăр-шăпăр çумăр:
Кун шучĕ çухалчĕ пуль...
Çак тĕксĕмлĕх витĕр – çулăм!
Чĕрӳ – чĕре мар! – вутчуль.

Ăçта талпăнать-ши чунăм,
Тĕнче – тăвăр пек – пушшех...
Мĕн-ма пурăнас лăпкă кунăм
Вутчуль ăшĕнчи вут пек?

Нихçан чарăнмаслăн çумăр,
Тепре шыв илессĕн çĕре...

♦♦♦

Туп та хушăк, хĕсĕн те – тархасшăн! –
Шăрчăкла юрла, юхтар куççуль...
...Хура-шурă пурнăçа савмашкăн
Ăмăрт кайăк чунĕ кирлĕ пуль.

Хура-шурлă пурнăçа савмашкăн
Хăвăнтан та вăйлă пулăн-ха:
Ĕмĕрлĕх тени иккен самантлăх,
Вăхăтлăх тени – яланлăха...

Çавăнпа кун-çул куççулĕ витĕр
Хамăр чупнă çарансем çине
Ытарми пăхатăп, йĕрмĕшмесĕр:
Юлччăр çарансем – ыттисене.

Юлтăр савăк – ыттисем валлилĕх,
Ырă, уçă кăмăл – юлтăрах...
Пирĕн ĕмĕр – сĕмленӳ паллиллĕ,
Сирĕн ĕмĕр – килтĕр çутăрах.

♦♦♦

Утатăп çапла: çухрăмшар...
Мĕн кĕтет, çавна пĕлĕттĕм, –
Сасартăк çӳле пăхрăм та:
Пуç çинче – курак пĕлĕчĕ.

Епле явăнаççĕ вĕсем!
Пуçăмри шухăш евĕрлĕ.
Кураксем кăнтăра вĕççен,
Каяс пек, каяс пек – ĕмĕрлĕх...

Шуйханнă чун шиклĕхĕ çеç!
Ак курăпăр – çурлăн таврăнĕç...
Эс ывăннă çеç, çавă çеç:
Йăлт! – тӳпе – ăшна – тăраннă.

♦♦♦

Кӑвакарнӑ кантӑкран
Шуҫӑм сӑрханайрӗ.
Эс чуптунӑ тутамран
Куллӑм вӗҫсе кайрӗ.

Вӗҫсе кайрӗ инҫене
Улӑх-вӑрман урлӑ...
...Анчӗ анлӑ хир ҫине
Ёнтӗркенчӗк хурлӑх.

Харсӑр, ҫамрӑк халӑмпа
Пуҫӑма ухаттӑм.
Халь пуплетӗп хампа хам, –
Куллӑма ҫухатрӑм.

Халь ҫӳретӗп хирсемпе,
Улӑхӑн-вӑрманӑн,
Тилмӗрсе чечексене:
– Куллӑма курман-и?

◆◆◆

Чечек чупрĕ улăх çиййĕн!
Пур-ха тĕлĕнессĕм...
Улăхра выртан тĕтриййĕ
Мĕнех тĕлленет-ши?

Тухĕ те хĕвел – вăратĕ
Тĕтрене. Тем калĕ.
Ырă тĕлĕклĕ, вăраххăн
Тĕтри те çухалĕ.

Эп кăна пĕр сăвăç-курнăç
Пĕлеймесĕр юлăп:
Тĕлĕкре тĕтре мĕн курнă?
Мĕн тĕлленнĕ улăх?

Ман валли тăрса юлать çеç
Пин чечек чиперĕ.
Ав, вĕсем хирĕç чупаççĕ!
Пăрăнас темерĕм.

♦♦♦

Çĕрле шурă тĕлĕк синкерĕ
Хыптарнă ăша: вăранайрăм,
Тăрса кантăкран тинкертĕм:
Йăлтах шурă пас тытса кайнă.

Кăвак кантăк витĕр, сĕм витĕр
Шупка çутă сăрхăнчĕ, юхрĕ,
Эп тăтăм пĕр хушă чĕнмесĕр,
Сасартăк таçтан сасă тухрĕ.

Ман ĕмĕрĕн кунĕ те каçĕ
Йăлтах пыр тĕпне капланчĕ,
Пĕр ăнсăрт сасса вырнаçрĕ,
Сасси тĕнчере çухалчĕ.

Анчах ку ăшри сасă пулчĕ,
Никам та ăна илтеймерĕ.
Папка çурăлас умĕн çулçă
Пас витĕр йĕни пулĕ терĕм.

Шупка çутăра вăрах вĕçрĕ
Телейсĕр касăлнă чунăм.
Темле чикĕре эп: каç вĕçĕ.
Темле чикĕре эп: ир умĕ.

◆◆◆

Ан кала купăсна, юлташăм!
Ма юри курăнас вут-хĕлхемлĕн?
Нихăçан та пĕтмест пуль çак ташă,
Нихăçан та пĕтмест пуль çак çемĕ.

Нихăçан та савас тенĕ çыннăм
Ыталамĕ мана çак хĕр евĕр...
Вазăри виçĕ роза – шаннă,
Пуçне уснă – шеллевлĕн, шеллевлĕн...

Пуçăма эп çĕклетĕп, куратăп:
Чӳрече леш енче – кĕрхи уйăм,
Пĕлĕтсем – лутрарах та, хура та...
...Чӳрече ку енче – суя туйăм.

Юратмасăр эпир юратасшăн.
Япăхрах – хамăра суйнăçемĕн.
Нихăçан та пĕтмест пуль çак ташă,
Нихăçан та пĕтмест пуль çак çемĕ.

♦♦♦

Тунсăх пусĕ. Уя çитсе тухăп.
(Эп – мăнкăмăллă, чунлă йăхран...)
Катаран ăшă варкăш юхĕ,
Варкăшпа вĕçсе килĕ йыхрав.

Варкăшпа илĕртӳ вĕçсе килĕ,
Асăмра чĕвĕлтетĕ сассу.
Çавă кирлĕ мана: илĕрт!
Е ятла – пур пулсан ятлассу.

Тӳсĕм çукчĕ – тӳсме халь вĕрентĕм.
Чунăмрах – хире-хирĕç ик çар...
Эс мана темĕн чухлĕ кӳрен те,
Ӳпкеле те, çапах – каçар.

Эс каçар юнашар пулманнишĕн,
Ачашсем çитменнишĕн каçар,
Санпа мар, варкăшпа йăпаннишĕн
Кун каçа, çĕр каçа, кун каçа...

* * *

Çутă каçăн варне кĕвĕ-çемĕ тултарнă,
Ярăнать сывлăшра пĕчĕк кайăк юрри,
Çурăлан улмуççи çеçкинчен хĕлĕх карнă:
Çакă каç! Çурхи каç! Лайăхрахĕ пур-и?

Кирлĕ мар пыл-шерпет. Ахалех ĕнтĕ ӳсĕр,
Ахалех юрланать юратуллă тӳпе.
Эп, айванĕ, пĕлмесĕр тата шикленмесĕр
Кĕвĕлерĕм çемме çурхи каç ыйтнă пек.

Çак çĕн уйăх çути! Ĕнтĕ ĕмĕрлĕх çутă,
Çак садсен шăршисем – нихăçан туймасла.
Кирлĕ мар хĕрхенӳ, кирлĕ мар пулăшу та,
Эп, асамлăх ăшне путнăскер, тухмасла...

Тĕнчене тухатман эп. Тĕнчи хăй пултарнă
Çак сада, çак каçа.
(Те чăнах, те юри?)
Çутă чунăм варне кĕвĕ-çемĕ пуçтартăм,
Ярăнать сывлăшра савăшулăх юрри.

◆◆◆

Кивӗ пӳрт. Хуралтӑ. Кӗрт вулканӗ.
Шкул ачи ҫил-тӑманра ашать...
Эп кунта чӑваш пулса ҫуралнӑ,
Тӗрлӗ енлӗн курнӑ чӑваша.

Ёҫпеле юна кӗрет хастарлӑх,
Ёҫкӗпе тӑванлӑх юрланать,
Урӑх пурнӑҫ – глобус пек астармӑш –
Пуҫӑма ҫаврать те ҫаврӑнать.

Чухӑнлӑх тӳнтерӗ – йӑваш чунлӑх,
Чурана ҫеҫ тивӗҫлӗ сӑпай
Манӑн кӑмӑлра та чылай юлнӑ,
Терт кӑтартнӑ пурнӑҫра самай...

Кивӗ пӳрт. Хуралтӑ. Чун вулканӗ.
(Тӳсӗмсем пӗтсен – чӑваш кӑра...)
Хӗвел тухӑҫ тата хӗвел анӑҫ
Халӑха чуста пекех ҫӑрать.

Эп кунта чӑваш пулса ҫуралнӑ,
Урӑх вӑхӑт – хам та урӑхрах...
...Тӗлӗрет чӑваш тесе хурлаймӗҫ, –
Эпӗ мар, чунри вулкан ҫыврать!

◆◆◆

Çеçен хир вăрмана тăрăнать,
Хир енне сулăнать вăрман.
Çакăнта манăн чун пурăнать,
Çакăнта пурăнать чунăм ман.

Пирĕнех мăн асаттесем
Хирпеле вăрман хушшинче
Çĕнĕ кăмăл, çĕн чун сачĕсем
Хăварайнă лартса çĕр çинче.

Çеçен хирĕн инçетлĕх çемми
Çĕнтерсе чăтлăхсен ахрăмне
Урăх юрă çуратнă – çĕнни,
Çĕнĕ ятлă – чăваш ятлине.

Пин чечек тĕсĕпе витĕнсе,
Асамат тĕсĕпе чĕркенсе,
Çĕнĕ кăмăл ӳссе-çитĕнсе
Куçăма уçтарма хистесен,

Килсе тухрăм эп çак вырăна.
Кунашкал ырлăх урăх курман:
Çакăнта иккен чун пурăнать,
Çакăнта иккен чунăм ман.

♦♦♦

Чăваш çĕр-шывĕ – юм хуранĕ,
Тухатмăш-юмăç айланать:
Çырми-çатри, уй-хир, вăрманĕ
Ултав тĕтриллĕн пăсланать.

Хуран çине тухать ӳкерчĕк:
Хура сăнар, шурă сăнар...
Мĕскер вĕретрĕç, мĕн пĕçерчĕç
Тухатмăшсем? Мĕне шанар?

Курăнмăшсем иртсе кайсассăн,
Пăсташ пăтравĕ йăвашсан,
Курасчĕ те каласчĕ: АСЛĂ
Çак уй-хирсем, çак чăвашсем!

Паянлăха сăр йăсăрланчăк,
Ăша вĕçтермĕш ăрăм çеç...
Тăрна-тăрна ширанă шанчăк –
Хуран çинчи çут хăрăм çеç...

◆◆◆

Ей-ей! Ку çĕр теме те курнă!
Теме те тӳснĕ ĕмĕртен!
Тĕнче сасси, паян эс – урмăш, –
Хурах тăвасшăн пирĕнтен.

Килсе кĕрет пăтранчăк сасă,
Вăрман ăшне кĕрсе çĕтет,
Ниме пăхмасăр, уямасăр
Çырма-çатра сасса çăтать.

Темскер те пулĕ, кӳлĕ – юлĕ,
Темскер те пулĕ, пур – юман.
Чăваш йăвашĕ кирлĕ пулĕ
Тĕнче хаярлăхпа тулсан.

♦♦♦

Çи-пуçăм манăн çармăсла,
Анчах та эпĕ çармăс мар.
Чиркӳ тавраш̆е вырăсла,
Анчах та эпĕ вырăс мар.
Чĕлхеçĕм манăн тĕрĕкле,
Анчах та эпĕ тĕрĕк мар.

Вăрман турипеле турать
Çеçен хирсенĕн çилхине,
Вăрман пĕлет, вăрман курать
Эпĕ камне, чăваш камне...
Çав пĕлĕве тĕнче хурать
Çĕн вăрлăха – тăпра варне.

Аваллăха шыра-шыра
Паянлăхра хĕнлентĕм эп:
Иртни иккен çĕрте-шывра,
Пуласлăхăм – янкăр тӳпе!
Çав çураçу-юратуран
Чăваш çуралĕ ĕмрипех.
Ик куçĕ – пиçнĕ хурлăхан,
Пит çăмарти – анис улми.

Тёнче çине кулса пăхать
Тёнче çине тухма килни:
Европа – шухăш,
Ази – хал!
Тата телей – Турă пӳрни...

◆◆◆

Çеçен хир çилхине çил турать.
Çеçен хир – ыран кун урхамахĕ –
Уйăхпа урине таканлать,
Кукалет те – килет ир юмахĕ.

Сӳнекен çăлтăрсен çутинче
Хĕвел тухăç чĕртет шурăмпуçĕ,
Чĕрĕлет кушăрханă тĕнче,
Çут тĕнчен сакăр енĕ те – уçă!

Çил кăна шăхăрать, çил кăна,
Е çĕмрен шăхăрать-и пуç çийĕн,
Çеçен хирĕ, тен, хăй ыткăнать,-
Пăтрашать иртнипе пулассийĕ.

Çĕр çинче çутăлсан кăвак çут,-
Эс ăна чылайччен ăнланмăн:
Ма тесен асăнта хура ут...
Эс, çапах та, пĕрре вăранăн.

Вара курăн: тĕнче – урăхла,
Çĕн тĕнче сансăрах çуралнă.
Çеçен хир çилхи пек – курăкла –
Эс иккен çил çинче вылянnă.

◆◆◆

Кун çути мĕнешкел паха та, –
Тĕттĕм каç йывăрри те пур çав...
Тĕлĕнсе-тĕлĕнсе пăхатăп
Хамăнах та ăнман пурнăçа.

Шаннă кайăк йăви пуш-пушă,
Юрату – кураймасăр пăхать.
Пĕр самантлăх таса куллушăн
Эпĕ кĕтĕм пин хут çылăха.

Ман енне эс тăвас утасшăн
Эп паратăп пурнас кунсене...
Хĕрхенӳсĕр паратăп, тархасшăн,
Çăмăллат çеç каççен çĕклемне.

Тикĕс кунăм та сансăр – тамăк,
Сивĕнет чун, писет илемрен...
Вăрмана шурă пас сăрланă, –
Ĕнтĕ маншăн çавах, пурпĕрех...

Пурăнатăп-ши е туйăнатăп?
Мĕн калам-ши? Мĕскер темелле?
Тĕлĕнсе-тĕлĕнсе сăнатăп
Хамăнах та текен телее.

♦♦♦

Туйӑмсем кӑнтӑра вӗҫсе кайнӑ.
Шурӑ юр витнӗ чун инҫӗшне.
Кӑсӑя теекен симӗс кайӑк
Чӗм кӗртет шӑннӑ хир тинӗсне.

Кӑсӑя теекен симӗс кайӑк
Сиккелет юлашки туйӑм пек...
Эпӗ хам та хирте ҫӗтсе кайнӑ,
Калаҫатӑп шап-шур тӗмсемпе.

Тӳпене е куҫа тасататӑп?
Ирӗк! Эпӗ санӑн патшу е тарҫу?
Шӑпчӑксен юррипе тек супатӑп, –
Ҫурхи кунӗ ҫаплах ҫук та ҫук.

Вӗҫсе килӗҫ вӗсем, вӗҫсе килӗҫ
Туйӑмсем-савӑксем. Кӗтнӗ-ҫке!
Кӑсӑя, хӑй пӗлмесӗр, сиккелӗ:
Пӑрланас чунӑма чӗртнӗскер.

◆◆◆

Утмăлтурат тӳпе сăнне упрать,
Усал куçпа ан пăхăр, сăнсăрланĕ,
Ыр куçлисемшĕн çак илем – тупра, –
Тинкернĕçемĕн пурнăçу юсанĕ.

Тинкернĕçемĕн тулĕ кăмăлу,
Тӳпе хăвачĕ сан чунна та анĕ...
Утмăлтуратлă пулчĕ сан çулу;
Тем мар эппин утас çулун тусанĕ.

Утмăлтурат сан шăпуна упрать,
Тӳпе элчи – куçран пăхать айваннăн,
Сана сăнать, сăнать, йăлтах курать:
Епле пурнатăн эс ухмах Йăваннăн.

Ан мĕскĕнлен! Санра чакми вăй-хал!
Эс хăвна ху çĕнмешкĕн те пултарăн...
...Ăсли нумай та – чунлисем сахал,
Утмăлтурат! Чунсăрлăхран хăтарăн.

◆◆◆

Мухтав сана, мăнаçлă Манăçу!
Çак сарă, хĕрлĕ, чакăр çулçăсемшĕн
Тек ĕнтĕ терт те, йăпану та çук,
Тархас та çук: хĕвел çутишĕн, сĕмшĕн...

Чĕре те ыратса ырать иккен.
Эс çулăмланнă, кăварланнă – халĕ –
Кĕрхи тĕнче çине йăваш тинкерекен:
Эс – урăхрах, эс – манăçу вăй-халлĕ.

Вăрман хушши – сӳнсе пыран пушар.
Сар çулçă мар, уру айне вăраххăн
Ӳкет эс туйнă ырату, типшар,-
Чун сăнчăрне тата-тата пăрахнăн.

Кĕр сывлăшĕ! Таса ăс-тăн уççи!
Кăмăл уççи.
Нихçанхинчен эс кунĕ...
...Тасатакан пушар – вăрман хушши.
Мухтав сана, мăнаçлă Манăç кунĕ!

◆◆◆

Ăнланманлăху – сăнран ӳкнĕ шур лантăш,
Çав лантăш çинчи хаяр çилĕн кулли.
Ăнман этем – ху! Кăмăлна шатăрт ан хуç:
Этемĕн – тӳсевлĕх, тĕнчен – йĕп хулли.

Нумай эсĕ курăн, нумай эсĕ илтĕн,
Нумай шухăш çаврăнĕ пуç тавралла.
Нимскер ăнланмасăр тĕнче çине килтĕн,
Нимскер ăнланмасăр эс кайăн калла.

Ах, пултăр эппин лантăшсен тунсăхлавĕ!
Шăл йĕрччĕр эппин çĕрлехи çилĕсем.
Сана валли мĕн?
Шурă лантăш утравĕ.
Тата – ăнсăртран – ăнакан çемĕсем.

◆◆◆

Çатăлти тирексем мамăкне вĕçтерессĕ,
Çавăнпа калаçаççĕ пĕр лăшсăр паян:
Çитес çĕрĕр сире хапăл пултăрччĕ теççĕ,
Каяс çулăр ан пултăрччĕ теççĕ, сая.

Мамăксем явăнса сывлăшра çаврăнаççĕ
Çĕтсе кайнă юр пĕлĕчĕ ӳпĕннĕ пек.
Кунпа çĕр таврăнать, мамăксем таврăнмаççĕ,
Ăсанаççĕ пĕлмен çĕрсене пинĕпе.

Мĕн юлать-ши кунта? Мамăксем те пĕлмеççĕ...
Константин Иванов урамĕ юлать:
Шур чиркӳ, сăр тĕрме, çутă симĕс больница,
Анлă Атăл хĕрри.
Кĕскенрех – пĕр хула.

Ах, епле питĕ ирĕк çилпе ярăнмашкăн,
Савăксен çилхине шевлепе турама...
Çатăлти тирексем калаçма чарăнмаççĕ,
Чăваш чунĕ кĕртеççĕ çак ват урама.

◆◆◆

Эп тăрап терĕн-им тӳпене çĕклесе?
Çут çанталăк çитмерĕ-им? Ан мăнаçлан:
Хĕллехи астăсем – вĕтĕ шур çеçкесем –
Юр çуса ярасла, çăлтăрсем çăвасла...

Калаçма-итлеме, савăнма-хурланма,
Юратма-тарăхма çĕр çине килнĕскер –
Шухăшларăн-им эс тӳпене тăрлама?
Ах, мĕскер туса хутăн, мĕскер?

Хуçăлаç те тӳпе каштисем – тăкăнать
Сивĕ юр, кивĕ юр, çăлтăр кĕлĕ кăна...
Тĕнче тытăмĕ йăшнă – йăлтах арканать,
Пуçунта – тахçан илтнĕ пĕр кĕлĕ кăна:

Атте Турă! (Пĕлместĕп кĕлле малалла...)
Çылăха каçарсам! (Чĕмсĕр эсĕ, пĕччен...)
...Хĕллехи астрăсен – юр айне пулмалла,
Юр айне пулмалла – эс аркатнă тĕнчен.

◆◆◆

Авăн уйăх вĕçĕн ăнсăрт çутă каçĕ
Ĕмĕт пулса юлĕ, асăма ăсанĕ.
Çăлтăрсем те кĕçĕр йĕс тусан тăкаççĕ,
Çĕр тусанĕ мар вăл – çăлтăрлăх тусанĕ.

Ĕлĕкхи укçа пек çавра-лапчăк уйăх
(Мĕн унта çаптарнă: хĕр-и, юланут-и?
Эпир каяс çул-и, эпир тухас уй-и,
Нихçан тулмас кăмăл пӳрнĕ ăнтăлу, тен?)

Йăлăну ан пултăр. Ăмсану ан пултăр.
Ытти пурпĕр мар-и? Çутăрах пурнар-и?
Çăлтăр пире куртăр, уйăх пире куртăр,
Хĕвелпе хĕрелтĕр шупкарах сăнарăм.

Хальлĕхе: тур панă ăнсăрт кĕрхи каçăм:
Юррăм та юмахăм, сăнăм та юмахăм.
Çăлтăрсем те кĕçĕр йĕс тусан тăкаççĕ,
Йĕс те мар, тен, ылтăн, –
Тимлерех сăна-ха.

◆◆◆

Ялтăртатать вăрман янтарĕ,
Çу ирĕ сывлăм пек таса.
Ах, кĕçĕр куç хупса пулмарĕ,
Эс килтĕн, ачашскер, аса.

Эс килтĕн те – кайма пĕлмерĕн
Йăл-йăл кулуллă, чиперскер.
Эп хам та çывăрас темерĕм,
Çӳрех эппин пĕр килнĕскер.

Тапта эппин асра пулин те
Чуна пусарнă тунсăха...
...Сана аса илни те – ĕнчĕ,
Эс, асăмри те – чăн ахах.

Кам уйăрайĕ, кам мантарĕ
Асра та эс çапла пулсан?!
Ялтăртатать вăрман янтарĕ,
Çу ирĕ санашкал кулсан...

◆◆◆

Тĕлĕкĕмрен вăрантăм-ха,
Тĕнчемĕр тĕлĕкне туясшăн...
Тен, çавăнпа темрен паха
Ирпе ирех çула тухмашкăн,

Тĕнче тĕлĕкĕнче пыма.
Тĕтре уçса тĕмсем курмашкăн,
Ахрат тухса выртсан ума
Ах-ах темесĕрех каçмашкăн,

Шевле ӳкес ту тăррине
Мăнкăмăллăн тапаланмашкăн,
Чун пуррине, хам пуррине:
Салам! тесе паллă тумашкăн.

Салам! тесе çуралнă пуль...
Салам! ыр суннă пуль тĕнчемĕр...
Ыр суннă, пехилленĕ – Çул –
Чун канăçне ан пĕлтĕр тенĕ...

♦♦♦

Сарă кайăк пекех кăмăлăм:
Пĕр салху та пĕр савăк кайăкăм...
Çиле хирĕç вĕçме çăмăл-и?
Çумăр айĕн вĕçме лайăх-и?

Ылтăнах хĕлĕхсем йăлтăрччĕ,
Хытă туртрăм пулас – татăлчĕç.
Хамăн юррăм хама та йывăр-çке, –
Итлекенĕ епле чăтĕ-ши?

Уяр хыççăн килет çумăрĕ,
Çылăх хыççăн килет айăпĕ...
Çиле хирĕç вĕçме çăмăл-и?
Çумăр айĕн вĕçме лайăх-и?

♦♦♦

Шанчăксем пĕтсен те эпĕ упрăп
Чунра шанчăксенĕн шанчăкне:
Варсем тăрăх утăп, çăлкуç тупăп,
Выртса ĕçĕп тăрă çăл шывне.

Ура вĕçне пырĕ пăрчăканĕ,
Улăх сарса парĕ тӳшекне...
...Те чăваш эп пултăм, те чикан эп:
Кил тесе шутларăм тĕнчене.

Сăвăçсем, чăнах тен, урăх халăх –
Чиканпа чăвашăн хушшинче.
Турă ятламалăх,
(Тен, савмалăх?)
Пире çӳретет пуль çĕр çинче.

Ман телейĕм – çухрăм. Пин-пин çухрăм.
Илемпе куç шарнă пулинех.
Шанчăксем пĕтсессĕн, çăлкуç тупăр,
Выртса ĕçĕр тутлă симпылне.

♦♦♦

Йăлтăр та йăлтăр сывлăм –
Манăн телей, ăнăçу...
...Хурăнлă çул пек сăввăм;
Курăклă, манăçнă çул.

Шăкăл та шăкăл саслăн
Кунĕ те каçĕ иртет...
...Вăхăт васкать пулсассăн,
Эс ан васка, поэт.

Шăнкăр та шăнкăр шывăм,
Шетмĕ текен тĕнче, –
Чун варринчи çĕр-шывăм,
Туршăн та, чун варринчех...

Вăштăр та вăштăрваркăш
Пĕчĕк ачу пек вылять.
Кил-ха, тăри, ларса кан кăшт:
Çул тӳпене выртать.

◆◆◆

Телей тухмасть. Тен, ыйтмаллаччĕ
Пӳлĕхçĕрен сăвап-тивлет?
...Чупса пырать те, ыталать те
Тĕнче ылтăнланса килет.

Чупса пырать те, ыталать те
Кĕрсе ӳкет ĕмĕтĕме.
Хĕл кунĕ пек кĕске самант-мĕн
Çырайнă ман пек этеме.

Çапах та пур телей саманчĕ,
Чуна тытса тăран самант...
...Чупса пырать те, ыталать те
Кĕрсе ӳкет ман асăма.

◆◆◆

Нăрăсем, кăткăсем, шăрчăксем – Улăп, тен...
Тӳпене тинкерейнӗ пуҫа эп пӗкеп:
Сар чечек сырса илнӗ сап-сар улăхсем
Ҫӗр ҫинчи планетарий пекех.

Эп сире сисмесен, туймасан – савӗ кам?
Пушлăхран тухнисем хуҫа чух, –
Никама итлемен, пăхăнман, савакан
Чунăма чарайма халăм ҫук.

Хум ҫине хум ҫӗклет Пушлăх вăйӗ – тискер!
Сурнинчен ҫăмăлрах – чун сутма...
Ҫӗр ҫинче шанчăк пур: сар чечек ятлăскер,
Чӗм те пур ҫӗр ҫинче – юратма.

Шăнăр курăкӗ пур, пӗтнӗк курăкӗ пур,
Аслăях пӗчӗкҫеҫ тӗнче пур.
Пушлăха ҫӗнтерсе тухакан Пурнăҫ пур.
(Курăксем хушшинче – Улăп пур...)

◆◆◆

Сывлăшё! Телей симпылё!
Асаматлă кунё те...
Вăштăр-вăштăр варкăш вылё
Çерем курăк хумёпе.

Эс мăнкăмăллăн, мăнаçлăн,
Çирёпленнё кăмăлпа
Шурлăх урлă утса каçрăн, –
Ут халь тупнă çулупа.

Килтёр кунё, килтёр каçё
(Шăл шаккаччăр кашкăрсем...)
Хулпуççи çине лараççё
Савнă ăмăрт кайăксем.

Хăвăнтан та эсё аслă...
Пысăк эсё хăвăнтан...
Йăлтăрать чипер пуласлăх
Çичё тёслён – умăнта.

◆◆◆

Пус çинче тăри çухалчĕ.
Эс арçын-и? Çирĕп пул:
Çухалмасть нихçан Вивальди,
Моцарт, Бах, Бетховен пур.

Çут тĕнче вăл – кĕвĕ-çемĕ.
Е шăпах пулсан çеçке,
Кĕввине вăл, тен, вĕçленĕ,
Тен, час пуçлĕ. Кăшт çеç кĕт.

Шарламасть пулсассăн уйăх,
Вăл – тăнлать. Эс те итле:
Пурнăç – савăк, пурнăç – хуйăх...
Пурнăç çийĕн эс çĕклен.

Чунлăх – хӳтлĕх.
Чĕмлĕх – хутлăх.
Ярăн, вĕç çав хутлăхра:
Сĕрме купăс вутлă-вутлă...
(Аякра та çывăхра).

◆◆◆

Сар хӗвел ҫутипе вылямашкӑн
Сана хистӗ чуну – юратулӑх.
Ан хӑра тӗнчепе паллашмашкӑн, –
Эпӗ сан чӳречӳ пулӑп.

Хурӑнсем пит ачаш симӗсленӗҫ,
Ҫу ҫитсессӗн тата тӗксӗмленӗҫ,
Кӗркунне, ылтӑн тӗс ҫапнӑҫемӗн,
Ӗмӗтсем, ӗмӗтсем – чӗнӗҫ!!!

Ҫавӑрттарӗ асамлӑ кун-ҫулӗ
Ыррипе усалне пӗлмесӗр.
Эс ан йӗр. Эпӗ пулӑп куҫҫулӗ.
Кӗркунне – чӳрече – йӗтӗр...

* * *

Мĕскер курмалла пулĕ ӳлĕм –
Пĕлмешкĕн çавна тур паман:
Паян – кăмăла илĕртӳллĕн –
Йыхрав турĕ шурă вăрман.

Пас тытнă турат айăн-çийĕн
Вăрман тăнăçне пăлхатса,
Çĕре пас тăкса, хĕвĕшӳллĕн
Вĕçет кайăк çул çухатса.

Темле тĕлĕке кĕрсе кайнăн,
Темле ултава лекнĕ пек
Ман хамăн та чунăм шуйханнă,
Ман хамăн чĕрем – кайăк пек...

Епле катаран илĕртӳллĕн
Курнатчĕ çак шурă вăрман.
Шыранăччĕ эп килĕшӳлĕх, –
Тупайрăм тухатнă асам.

Темле тĕлĕке кĕрсе кайнăн
Лекмесĕр тĕнче анлăшне, –
Ăçта эп килтен тухса кайнă?
Тен, кантăк эрешĕ ăшне?

♦♦♦

Ёмӗр вӑрӑм. Тата – кӗске.
Тунӑ утӑмшӑн эп ӳкӗнмерӗм.
Парнелерӗм сана пӳске,
Сар хӗвел пӳскине парнелерӗм.

Эсӗ кул, эс выля, эс – пул!
Эсӗ пул ӑраскаллӑ, телейлӗ,
Е чуну хурлансан – ал сул,
Манӑн пур, – те, – парне-хӗвелӗм.

Тухӑҫран анӑҫа сикет
Сарӑ чӑмӑр пӳске ҫураҫуллӑн...
...Йӑтӑнан тарӑн ҫыр хӗррипе
Кукӑр-макӑр выртать ман ҫулӑм.

Ҫитӗп санӑн патна пурпӗрех!
Эсӗ кул, эс выля, эс – савӑн!
Эп те ҫын. Ман та пур чӗре:
Варринче – пӗр сӑмах – Санӑн!

♦♦♦

Пушă хирсем çунать тееççĕ,
Çунать тееççĕ чул.
Мĕн çуннине кăна пĕлмеççĕ:
Çунать пирĕн чун.

Кам суйине суяс теетпĕр
Юмах юптарса:
Вут витĕр тухсан (пĕлетпĕр)
Сăмах – таса.

Улталакан хальччен пулманччĕ:
Çунман – ăшши çук...
...Çутă тесе сĕме калаççĕ
Чунсем сивĕ чух.

♦♦♦

Шăплан, айван! Пуш хир – хаяр.
Хура хуртсен наркăмăшне
Ӳтпе пĕрле çыртса кăлар,
Сурса пăрах хăйăр ăшне.

Савакана эс савнă. Халь
Çак çӳçентерчĕк пушлăхра
Пул бедуин эс, пул нухай:
Ху тухнă пуш хире юрат!

Хевтӳ çитмест-и? Ан шарла.
Эппин эс ху – хăйăр пĕрчи.
Каç сĕмĕнче те кăнтăрла
Сана вĕçтертĕр хаяр çил.

Пулас килмест-и хăйăр сан?
Эппин тăрса утсам, айван.
Пĕр симĕс курăк тĕл пулсан:
"Каçар!" – тесе выртса йăван...

♦♦♦

Кĕнеке шкапĕсем йĕп кăларнă,
Хăйăр кĕрчĕ витет дивана...
Çăварта – те тăвар, те çăварлăх,
– Çавă кирлĕ сана, айвана!

Тăруках каç пулать те – сив куçлăн
Илĕртсе сивĕ çăлтăр сăнать...
Çут тĕнче уçрăн-и?
Уçрăн, уçрăн...
Ку – тӳлевĕ сана, айвана!

Çын курмасть, çын пĕлмест: ма куççулĕ
Хăйăра çухалать, сăрхăнать.
Çĕрĕпех кашкăрсем юншăн ӳлĕç,
– Мĕн çитмерĕ сана, айвана?

Найкăшмастăн. Йĕместĕн. Сассу çеç
Пыр тĕпне хăйăл-хăйăл килет.
Çут тĕнче – яланхи пекех – уçă!
Мĕн кĕтетĕн? Тата: мĕн кĕтет?

* * *

Тӗнче пек сӑввӑм пур-и ман?
Е – ҫӳпӗ ҫеҫ – хурланмӑп:
Юрлас тесе эп пурӑнман,
Пурнас тесе юрланӑ.

Хамӑр хака пӗлме пӳрмен,
Тӳри пӗрре – малашлӑх.
Тӗнче текен капмар кермен
Юрланӑҫемӗн – аслӑ.

Юрланӑҫемӗн – вӑрттӑнрах
Ҫеҫен хирпе пуш хир те...
Йӑлтах иртет, иртет вӑрах
Тӗлленчӗк ҫутӑ ир пек.

◆◆◆

Хула шăв-шавĕ хыççăн – шăплăха.
Тăван пейзажăн лăпкă ытамне,
Тăван ялти йăмралăх сулхăнне
Кĕрсе ӳкен те – тĕлĕнсе пăхан

Тулаш тĕнчен выляв-ылмашăвне...
Çак çырмасем – çавах та – çавах мар,
Çак çеремсем – çавах та – çавах мар,
Сăнăм тени те – майлă аçунне.

Иртет – йĕртет. Никам ыйтмасть пиртен:
Кама саван, кам санăн чăн тăшман?
Ыйтсассăн та каламăп: вĕсем – ман.
Иртет – йĕртет. Эс – сывлăмлă ир пек.

Ылмаш-вылянчăк çеç – яланлăха...
Кил умĕнчи кив пĕрене çинче
Ларатăн эс, "философ", темĕнччен
(Уру çине, ав, кăткă улăхать...)

♦♦♦

Шурă чĕнтĕр çыхать улмуççи,
Кĕмĕл хĕлĕх карать сарă кайăк.
Тӳпере вăшлатать чун уççи, –
Ăшă варкăш килет кăмăл майăн.

Йăлт тавар. Йăлт пасар. Кам пĕлет?
Тĕнчене, çынсене мĕн пулнă?
Ăмăрт кайăк текен сар хĕвел
Пушлăхра çулăмран йăва тунă.

Эпирех нишленсе ларнă чух
Пĕчĕкçеç чĕпписем çунатланнă...
Ту çине ирхине кĕтме тух
Сар хĕвел чĕпписем çĕре анĕç...

◆◆◆

Тĕттĕм, тĕттĕм тĕнчере
Пĕчĕк кил ларать.
Çав килте ача чĕри
Савупа тулать.

Чун çутиллĕ каçсенче
Чуна кĕчĕ чĕм:
Атте-анне куçĕнчен
Илтĕм таса хĕм.

Ăнтăлмашкăн, ăнтăлма...
Юлаям пĕччен, –
Килĕм! Санăн кăмăлна
Сарăп виличчен.

Радиосăр, çутăсăр
Тĕлĕклĕ каçсен
Сăвапĕпе утăпăр
Сăвапсем пĕтсен.

Тертлĕн те мăнкăмăллăн
Утăпăр эпир.
Пурăнасчĕ çăмăллăн!
"Юрамасть", – тет кил.

◆◆◆

Шăпасăм ман – Лаокоон.
Каçа çĕнни, хама çĕнни...
Ах, çутăлсан та çĕнĕ кун
Илсе килмест нимскер çĕнни.

Кун-çулăм – ирĕке тухма
Асаплануллăн ăнтăлни.
Тĕнчи тискер е эп ухмах?
Çĕлен, çĕлен, çĕлен тăлли.

Эп ирĕклĕ пулаяс çук,
Тăлăсене татаяс çук,
Юн тапнă чух, чун çуннă чух
Тăлланипе килĕшес çук.

◆◆◆

Никам та курман çитмĕл çичĕ шевлеллĕ
Тӳпе тĕсĕпе юрату тĕсĕ пек,
Уçланкă варне шăтса тухнă хĕвелĕн
Ачи –
Пит аманчăк, черченкĕ чечек.

Пĕри – татăк çăкăр тупмашкăн васкană,
Тепри – тăр куçпах – курнине ĕненмен.
Анчах ытларахăш çулне такăрланă
Сĕм чăтлăхалла.
Илĕртӳ-сас енне.

Ултав яланах илĕртӳллĕ, ыр саслă,
Тухать вăл шурти аçтаха пырĕнчен...
...Каçар та, чечекĕм, тен, эсĕ – ултавçă?
Юри палăрмастăн?
Илемлĕх – пĕччен?

# КАНСЁР КАÇ СĂПКИ

1

Пĕр евĕр кичем пурнăçу тăнна илĕ,
Асилĕн тахçан хĕмленсе çуннине.
Епле аса илĕн, çапла чупса килĕн
Каçкўлĕм пахча картисем çуммипе.

Каçса каясла шăпчăксем юрра ярĕç,
Шывсем шăнкăртатĕç каçа тухатса.
Урам тăршшĕпех йытă вĕрĕ хаяррăн
Пускил карчăккин ыйхине çухатса.

Епле çулăмланнă, çапла кăмрăкланнă:
Савулăх кăвайчĕ хыçра тĕлкĕшет.
Эппин эсĕ мĕншĕн паян капăрланнă?
(Чечеклĕ юбку, чăнахах, килĕшет...)

Епле аса илĕн, çапла манса кайăн.
Эпир ларас çук тек кăвайт çуттинче.
Пĕр евĕр кичем пурнăçу юхнă майăн
Вучах эсĕ чĕртĕн тĕпел кукринче.

2

Каçхи вĕтлĕхре çатрака çатăртатĕ.
Шарт! сикĕн те, утăн ĕне çавăтса.
Юпа лампăчки шупка сăнлăн çутатĕ
Килӳ умĕнче. Шиклĕхе салатса.

Юпа тăрнелле пăхса илĕн васкавлăн,
Анчах асăрхаймăн тӳпе çăлтăрне.
Ĕне сумалла-çке, тесе ăшра калăн,
Сисмесĕр саспах калаçса янине.

Ĕç-пуç пуçтарсассăн пĕр хăнăхнă майăн,
Каçхи апат хыççăн эс вырăн саран.
Старик юнашар çывăрать. Ĕнтĕ лайăх.
Пĕр эсĕ кăна çывăрма та хăран.

Кĕрхи вĕтлĕхре юрату çĕтсе кайнăн,
Пĕр ят – çăлтăрла – тӳпене тарнă пек,
Тăрук – ыйăха-тĕлĕке путнă майăн
Çав савнă ята
Кăшкăрса ярас пек.

3

Çитет ĕнтĕ çур çĕр. Автан сехĕрленĕ
Çĕре çурмалла çурасла! Шăпасем...
Килес çумăра систерсе кансĕрленĕç
Хăма куписем айĕнчи шапасем.

Тĕлленнĕ-тĕлленмĕн те пурăннă-пурăнмăн
Йăванăн тӳшек ăшĕнче темчченех.
Унта пуç айне арман чулĕ-и хунă?
Е хунă ăна чун çине, чун çине?

Лăплан. Сан патна ачаш варкăш яратăп,
Сăпка пек сиктерĕп çак кансĕр каçа.
Эс çывăр эппин.
Ирпеле çеç вăратăп
Пӳрт çи тăррине çумăрпа шаккаса.

♦♦♦

Хир ачи – кĕтӳçĕ мар-и?
Тухрĕ те илем ума,
Ăмăрт кайăк йăтса кайрĕ
Пĕчĕкçеççĕ чунăма.

Çĕр çинче утса çӳрерĕм
Çынсем пек пулас тесе, –
Чунăм ăçтине пĕлмерĕм,-
Вăл иккен çӳлте вĕçет.

Те инкекĕм, те телейĕм,
Манмăп хир тӳремлĕхне.
Пуçăма пĕксе çӳрерĕм
Тăнласа тӳперине.

Ӳсрĕм хам та, чун та ӳсрĕ
Пĕвĕмрен те хăвăртрах, –
Кĕвĕçӳсĕр, вĕтелӳсĕр
Утрăм хĕсĕк пурнăçра.

Сăввăмсем – уй чӳк тумалăх,
Кăмăлăм – кăвайт хума...
...Ăмăрт кайăк, ăмăрт кайăк,
Тавăрсамччĕ чунăма!

◆◆◆

Пĕчĕк вăрман – хальлĕхе...
(Пысăк хула – сыв мар!)
...Шăплăха... Канлĕхе...
Шăпчăк юрри – шав мар.

Сывлăмлă ир çинче
Çав вăрмана кайсан
Шăпчăк сасси-хумĕнче
Чăпăл кĕресчĕ ман.

Эп – тытамак ернĕ пек –
Шĕкĕр текен хулара
Асапланап эрнипех,
Кунлăх – тухса тарап.

Килчĕ чул ĕмĕр каллех.
Темĕн те пур – чун çук.
Ĕмĕр иртет ахалех,
Пушă, хăрушă кун-çул.

Шăпчăк! Мана илсе кай!

◆◆◆

"Юрату шевлийӗ", – терӗн...
Шевли пур, ҫук – тытаканӗ,
Эс ӑна ан тив, ан перӗн,-
Санӑн мар вӑл – Ҫутаканӑн.

Куҫ – ҫӑлкуҫ. Шевле вылятмӑш.
Чун – ҫӗр тӗпӗнчи шыв ҫуль.
Юратнишӗн – пит юратмӗҫ,
Мӑйран ҫакӗҫ арман чуль.

Ах, ҫапах вӑй ҫитерер-и
Тӗнчене тасан курма:
Пӗр кулар-и, пӗр йӗрер-и,-
Ҫуралса – ҫынах юлма.

Шевлене нихҫан тытаймӑн,
Кирлӗ мар хӑвалама,
Чун тапать, тапать ҫӗр айӗн
Пӳрнӗ-ши ҫӑлкуҫ пулма?

♦♦♦

Сывламастăп ĕнтĕ хашшăн,
Çӳреместĕп çулăмлăн...
...Тем тума та пултарассăн
Туйăннă çав. Туйăннă!

Самани çапла-ши килчĕ, –
Кайрĕ сас тӳпе тăрне:
"Усалтан тур хăтаринччĕ,
Упраясчĕ ыррине..."

Эс тата мĕскер тăвасшăн?
Кĕлĕ ту. Ма – хуйăхлă?
...Тем тума та пултарассăн
Туйăннă çав, туйăннă...

◆◆◆

Чупрăм ывăна пĕлмесĕр,
Вĕçрĕм кайăкăн,
Пурăнтăм тĕлли-паллисĕр, –
Ĕнтĕ айăплă.

Чунăм канăçас пулсассăн
Чуна кĕрĕттĕм!
Мĕн тума мана хаваслăх
Тата ирĕклĕх?

Манăçасчĕ – манăçаймăн:
Çăкăр çĕртни çех...
...Ан тирке-ха, вулаканăм,
Эпĕ вăл – эсех!

Çылăх-айăпсен черечĕ
Вĕççĕр курăнми...
...Тĕлĕкре тертлентерет-и?
...Çапла пурăннă...

♦♦♦

Çут çанталăк кансĕррĕн сыврать,
Йывăççем те йывăррăн сывлаççĕ...
...Пурнăç тупсăмне тек ан шыра,
Эс – тĕнчен пĕр тĕлĕкĕ кăна-иç.

Ыйхă витĕр – çулсăрлăх кăна,
Уйăх витĕр – çул выртать яланлăх.
Çылăхсем илсессĕн тыткăна,
Уйăх витĕр ӳкĕнсен – тасалăн.

Кĕçĕр – ыйхă вĕçсе кайнă каç,
Кĕçĕр – уйăх та таçта тарса пытаннă.
Кас та кас килет-çке çилĕ: кас та кас...
Ма хăруш сана çак çĕр ытамĕ?

Вилнисем килеççĕ тĕлĕке.
Вилнисем чĕррисене чĕнеççĕ.
Эп тухасшăн пултăм – ирĕке!
Ирĕкне-мĕн усалсем сĕнеççĕ.

Кĕçĕр эпĕ – вĕççĕр çĕтнĕ сас.
Вилнисем, ан чĕнĕр. Сассăм пур-им?
Сĕм çĕрле. Çил-тăвăл. Па-рăн-мас-
тăп. Çуталĕ тул. Эй, пурнăç, пурнăç...

◆◆◆

Самани çавнашкал халь – пăрăнăç, –
Манса кайрăмăр çын тивĕçне:
Юрату, пултарулăх, пурăнăç,-
Çухатаççĕ пĕлтерĕшне.

Хĕвел çеç, ĕлĕкхи пекех, çулăмлă,
Курăк çеç, ĕлĕкхи пек, ачаш.
Туйăнать: мĕн пурри – иртнин сулăмĕ,
Çĕнни пур-и? Чупать пĕр ача.

Пушлăха янратса, пĕр хуйхăсăр
Вăл кулать. Вăтанать. Пытанать.
Эпĕ – кам? Эсĕ – кам? Эй, пăхăсăн:
Ман пата çав ача ыткăнать...

◆◆◆

Пур унта... Сенкерлĕх ăсмалли
Çичĕ ĕнчĕ куçлă Алтăр çăлтăр...
(Çĕр çинчи – çĕр çинчисем валли)
Сан валли – тӳпе симпылĕ пултăр!

Вăрмана кĕрсессĕн – хăраман,
Уй-хире тухсассăн – куç шартарнă,
Каламан: йăлт кайтăр харама!
Каламан: ку пурнăç – йăлăхтармăш!

Пурпĕр пуррипе çеç çырлахман:
Çăлтăрсем – мачча çинчи пек – çывăх!
(Çырлине татнишĕн – çылăх мар,
Çырлапа çеç çырлахни... çылăх...)

Çĕр çинчи – çĕр çинчисем валли.
Эп кăна пĕлетĕп: çу çитсессĕн
Алтăра ӳплештерсе кӳлле
Симпылпа чăпăл кĕретĕн... эсĕ...

◆◆◆

Эп çаврăнатăп авăрта,
Эп сăвăпа сыв мар:
Мухтавăр та, ултавăр та,
Ни тавăр кирлĕ мар.

Çуралнă, теççĕ, кутăн эп,
Ман авăр – кутăнла:
Тӳп-тӳрĕ утнă чух – тӳнеп,
Тӳнсессĕн – утăмлап.

Ман авăрĕ те – тӳпене,
Çавраçилпе пĕрле.
Халь тин мĕскершĕн ӳкĕнем?
Тур панă – ĕмĕрле!

Епле хавас, епле хастар
Тĕнче чуна кĕрсен.
Кам сывă тата кам сыв мар –
Калĕç: ĕмĕр иртсен...

♦♦♦

Епле çуталса, ялтравлăн
Иркӳлĕм инçет çиçет...
...Чыссăрлăхăмпа мухтавăм
Çак çылăхлă çĕр çинчех.

Килет кун çути – çунатлă –
Çунатлантарса чуна,
Калатăп вара: пурнатпăр!
(Пурнатăн-и? Е – çунан?)

Вăрман тăрринче хĕп-хĕрлĕн
Ташлать тап-таса шевле.
Аннеччĕ.
Савниччĕ.
Халь – хĕрĕм
Хистет тинкерме çӳлеллех.

Чун аслăшĕ, кăмăл инçечĕ,
Чун тăвăрĕ те – веçех!
Çак çылăхлă çĕр çинчех-çке,
Çак çылăхлă çĕр çинчех...

◆◆◆

Кун-çулăмпа çураçрăм,
Кун вăл – килет те каять:
Йĕр хăварасшăн тăрмашрăм, –
Юр çинчи йĕр çеç юлать.

Каç çил-тăман тухать те
Шик! шăхăрса кулать,
Акăш та макăш тухатмăш
Йĕр çине юр купалать.

Пулĕ юртан çур куççулĕ,
Юхĕ те – юлĕ пăтранчăк.
Татăлнă ĕмĕт юлĕ,
Юлĕ çухалнă шанчăк.

Чун-чĕрӳне çунтарни те,
Е савăкпа тултарни –
Мĕн пулчĕ вăл? Ним те.
Ма эппин вăл – пурăнни?

Кун-çулăмпа тавлашрăм,
Пит ăраскалсăр мар пуль:
Йĕр хăварасшăн тăрмашрăм, –
Юлчĕ-и?
Мĕн сан пур?

◆◆◆

Çумăр тумлать е куççуль?
Эс – самана хуçи мар.
Хăмпăланать те шыв,
Кăмпаланать вăрман.

Пур сан пĕр кивĕ пурак,
Тарăн калуш та пур:
Пул йăвашрах, лăпкăрах,
Сапăр та ырă пул.

Ав, шăрçаланнă пилеш,
Ав, хăмăрланнă юман.
Кĕркуннепе ан кĕреш,
Кĕрĕн хуçи эсĕ мар.

Эс – чи телейлĕ çын пек
Пыр вăрманпа хуллен:
Тĕм айĕнчех – чечек,
Тĕм айĕнчех – çĕлен,

Тĕм айĕнчех – кăмпа...

◆◆◆

Хут хуçлатнă та тунă, вĕçтернĕ,
Хавасланнă. Халь – шкул умĕнче
Варкăшпа хускалаççĕ пĕрерĕн
Самолет ĕлкисем темĕнччен.

Вĕсене çавра çил çавăрттарĕ,
Çӳп-çапа шăлса пухĕç кайран...
...Ача ĕмĕчĕ – чăнлăх пулмарĕ,
Вăйă юлчĕ – таçта – вăйăрах.

Вăйă юлчĕ – чунра – чăн пулмалăх
Упраса çав вĕçев хăватне.
Йĕмелле-и кунта, кулмалла-и:
Сăнаса самолет асапне.

Хутран тунă та – çĕрнĕ. Ан шырăр.
(Тăпра пулнă – пулатпăр тăпра!)
Чун вĕçевĕ кăна – ырă-ырă,
Чун вĕçевĕ кăна – уçлăхра.

◆◆◆

Чӳрече леш енче – урăхла самана,
Чунсăрла самана халь – пĕлетпĕр.
Çав киле, çав яла, çав вăрман-çарана
Юратсах ĕнтĕ эпĕр вилетпĕр.

Çĕнĕ ӳсĕм килет – вырăса тухнисем
(Ырринчен ютшăнтарнă çĕн ӳсĕм...)
Халăх халĕ хухать те хухать хухнăçем,
Мĕн юлни, юлашки, тискер тӳсĕм.

Хам йĕрпе чуптарасшăн пулман тĕнчене,
Çынсерен – хăй шăпи, хăй măскалĕ.
Хăратать çеç курсассăн пĕр пек куçсене
Хăть ăçта: Шупашкар-и, Мускав-и...

Кăшкăрмастăп: кам илтĕ те итлĕ мана.
Хăвăр пурнăçăр – хăвăр пĕлетĕр.
Çав киле, çав яла, çав вăрман-çарана
Юратсах ĕнтĕ эпĕр вилетпĕр.

◆◆◆

Ана çинче виççĕн вырĕç:
Иккĕш – чăваш, пĕри – вырăс.

Ана çинче виççĕн вырĕç:
Пĕри – чăваш, иккĕш – вырăс.

Ана çинче виççĕн вырĕç:
Виçĕ вырăс.

Унтан –
Выраканĕ те пулмĕ.

♦♦♦

Кĕпе аркине çĕклесе
Хумсем çапакан хăйăр çийĕн
Кулса-выляса эс чупатăн.

Çапла килчĕ пурнăç тӳпи.
Иртнишĕн те ĕнтĕ кулянмăп:
Унта – хĕр ача! – эс чупатăн.

Ман пурнăç хури-шуррисем
Уру айĕнчи йĕрсем евĕр
Хум çапнă-çапман сухалаççĕ.

Ах, Атăл! Леш енĕ – кăвак.
Унта – пуласси – паллăмарлăх.
Кунта – хĕр ачам! – эс чупатăн.

◆◆◆

Хĕрес çумне хĕрес –
Тĕрĕ пулать.

Эреш çумне эреш –
Илем юлать.

Йăнăш çумне йăнăш –
Кун-çул пулать.

Çылăх çумне çылăх –
Шăпам улать.

Хĕрес çумне хĕрес –
Масар пулать.

♦♦♦

Халь иртрĕ тĕлĕннин сăлтавĕ,
Пĕр пĕчĕк чăнлăх тупрăм пуль:
Тӳпе сана мĕн чухлĕ савĕ,
Çынсем кураймĕç çавăн чуль.

Эп кăмăллă та çĕкленӳллĕ
Çӳретĕп халĕ çавăнпа.
Тӳпе савнишĕн ĕмĕр тӳлĕп
Эсир амантнă чунăмпа.

Хаярланмастăп. Ыр сунатăп.
(Тинех вĕрентĕм!) тăшмана...
Эсир тискерлĕхре çунатăр
Нишлентерсе хăвăр чуна.

Кăвак тӳпен чакми хăвачĕ
Çӳлтен-çӳлтен-çӳлтен анать.
Эсир пĕлмен тĕнче хавасĕ
Суранăмран шăтса хунать.

◆◆◆

Тул çути сенкерĕпе
Эп сана сава пуçларăм, –
Хăнăхса çитес çук пек,
Ют юлас пек Шупашкарăм.

Тул çути сенкерĕпе
Вăранса çитмен хулаçăм,
Паркри кайăк юррипе
Тĕлĕкне сирсе ярасшăн.

Мĕн тĕлленнĕ? Кам пĕлет.
Мĕн ĕç пур ун, ыйхи вĕçнĕ
Пĕр чăваш сăвăçпеле?
Хăйĕн пурнăçĕ, хăй ĕçĕ...

Асфальтпа шаклаттарса
Урăлса çитмен хĕрарăм
Шăплăха пăталаса
Таврăнать таçтан, мăнтарăн.

Ир-ирех пулла кайма
Тухнă арçынпа тĕл пулчĕ,
Ыйтса илчĕ те туртма
"Чао!" – терĕ те, ал сулчĕ.

Тул çути сенкерĕпе
Йăвашрах пек Шупашкарăм...
Эп те раща хĕррипе
Вăтанса килеваскарăм.

◆◆◆

Пахча пуҫне лартнă
Катемпи хĕресĕ,
Ҫине уртса янă
Салтак шинельне.
Ĕнтĕ эп пĕлместĕп:
Те кулас-йĕрес-и,
Те пырса тăрам-ши
Катемпи ҫумне.

Курччăр пурте: акă
Ик тăмсай тăраççĕ.
Кулччăр кураксем те,
Кулччăр чанасем.
Ĕмĕр палли – эпĕр
(Хурах ахăрать-ҫке,
Суйрĕç чунлисем те,
Сутрĕç чинлисем...)

Ман хастарăм пур-ха,
Сан – салтак шинелĕ,
Тус-юлташ пулар-и,
Тăлăх катемпи.

Каҫа килтĕр сулхăн,
Ирпеле – хĕвелĕ,
Чыслăха сыхлар-и,
Тăмсай йӳтĕмпе?

Урăхла май ҫук та...
Халь этем – тавар ҫеҫ.
Раҫҫей анлăш-урлăш
Пĕр пысăк пасар.
Иксĕмĕр ҫеҫ – ҫупкă!
Хуралта тăратпăр.
Кулаканĕ култăр,
Эпир – тавар мар!

◆◆◆

Çул иртсе пынăçем çут çанталăк паха:
Ешĕл тĕс, сенкер тĕс кăмăла çывăхрах,
Суйларах калаçатăн кашни сăмаха,
Лăпкăрах йышăнатăн килен йывăра.

Яшлăхра çунмаллах, çунмасан – çутти çук,
Ăшши çук кăварпа шăранман сăмахсен,
Куç ачашлăхĕ çук, хĕр хĕрӳлĕхĕ çук,
Çунмасан – йăнăш мар – яшлăх çук та тесен.

Ман хыçра: хĕрлĕ, симĕс, сенкер фейерверк
(Çăлтăрсен хĕлхемне çĕр çинче чĕртнĕскер!)
...Халь ларатăп паркра, канлĕх сывлăшлĕ сквер
Пăшăлти сассипе мана калĕ мĕскер?

Çут çанталăк калать: кашни вăхăт паха,
Кашни вăхăт пĕрре çеç килен йăлл самант,
Чунупа çамрăк пул, çамрăклат ватлăха...
...Шĕл кăвар çийĕнче симĕс тĕс шăранать.

◆◆◆

Пушлăх хумханать çиллессĕн,
Кăларать хура хунав,
Шăпчăксем халь илтĕнмеççĕ,
Тухрĕ вăхăт – çăхана.

Вăр-хурах, шуйттан эшкерĕ,
Явăл еркĕнĕ – ясар...
Таврăнать тĕнче тӳнтерĕ:
Чун сутса илет пасар.

Тӳперех-мĕн хура çăлтăр...
Çутă çăлтăр шевлине
Чăмласа çăтать чараксăр,
Чунĕ çук ун шеллеме.

Шăпчăксем халь шарламаççĕ,
Килчĕ вăхăт çăхана, –
Çăхансем мухтав юрлаççĕ
Çуралан Чингисхана.

Вăхăтпа эп куçа-куçăн,
Улăп чунĕ – ман асам.
Çутă çăлтăр. Çутă куçăм.
Эх, ачам...

◆◆◆

Пурӑнас та килет,
Сӑвӑлас та килет, –
Икӗ кӑмӑл манра ҫапӑҫаҫҫӗ.
Чӗрӗ пурнӑҫ – сипет,
Чӑн поэзи – тивлет, –
Шайлашмаҫҫӗ иккен, шайлашмаҫҫӗ.

Ик турра кӗлтума
Майӗ ҫук, юрамасть:
Пурӑнаймӑн – тата – сӑвӑлаймӑн.
Тав сире, тӑвансем,
Тав сире, тӑшмансем, –
Пурӑнмашкӑн памарӑр. Пит лайӑх:

Ҫумӑрсем ҫунӑ май
Куракпа тус пулма,
Ҫак йӗпе тӗнчере савӑнмашкӑн!
Никама кирлӗ мар.
Тен, никам кирлӗ мар?
Хӗнлӗ ирӗклӗх ҫеҫ – юрламашкӑн.

◆◆◆

Шур тӗтре каять те варсемпе
Кӗлеткем те, чун та ҫӳҫенет...
Те чӑнах, те тӗлӗк варрипе
Сан сассу мана чӗнет, чӗнет.

Шур тӗтре каять те варсемпе
Шухӑшӑм йӑлтах иккӗленет.
Эп чӑтап, тӳсеп-ха – арҫын пек –
Эс епле-ши? Кам сана шеллет?

Шур тӗтре каять те варсемпе
Шур чечек каллех асра шӑтать,
Ӳсӗртет шерпет пек шӑршипе, –
Эп чӑтатӑп.
Эс чӑтатӑн.
Вӑл чӑтать.

◆◆◆

Çак-и ёнтĕ ман телейĕм?
Нихçан асра пулманччĕ;
Анне тĕртнĕ пит шăллийĕ
Куçран куççуль кăларчĕ.

Мĕн тăватăн, ывăлăмçăм,
Тенешкелех туйăнчĕ.
Тикĕс тухнă сывлăшăмçăм
Кăкăрăмра пӳлĕнчĕ.

Çӳçенет сăр-сăр çан-çурăм,
Çут çанталăк шăмарчĕ.
Атте лартнă хурлă хурăн
Хуллипеле хăмсарчĕ.

Кĕçĕр каллех намăс урлă
Пырăп вăрă-хурах пек...
...Те вил ӳсĕр, те вил урă...
...Тепре кăна курасчĕ...

◆◆◆

Чӑн сӑмах – чун сӑмахӗ – тухать
Çутатса ют çӗрти хӗвел пек,
Тӗтре сырнӑ улах улӑха
Сӑрласа ылтӑнпа-кӗмӗлпе...

Тӑван ен курӑнать-и улшу?
Йӗс шӑнкрав чӗлхи евӗр тӑри.
Пӑсланать тул çутиллӗ çӗр-шыв.
Чун çунать, чун çунать – çунтӑрин.

Ӗнтӗ эс сӑмахпа тӗлме-тӗл,
Ӗнтӗ эс сӑмахпа шайлӑ, тан.
Сӗм каçри тӗлӗке-ӗмӗте
Ир кӗтречӗ тума тӑрӑшан...

Эс – хӗвел урипе утакан –
Этемсем хушшинче – ютскер,
Чунунта вӑхӑта шӑратан:
Сӑмаха çаврӑнма килнӗскер...

◆◆◆

Килсе кӗрет çурхи наянлăх
Пӳрт çи тумламӗн çеммипе...
...Епле пăтравлă, çил-тăманлă
Сан иртнӗ кунусем. Хӗл пек.

Эс алăк умӗнче ларатăн
Хӗвел хӗмне сăна илсе
(Тен, ватлăх умӗнче ларатăн
Çил-тăмана аса илсе?)

Çук. Ватлăх мар ку. Çӗн киленӗç.
Çурхи кун каснă алăк çеç.
Эх, сывлăшӗ!
Таçта çӗкленнӗ
Киле килеслӗ кайăксем.

◆◆◆

Аманнă чунăма çунат пама
Хĕвел шевли чӳречерен кĕрет:
Пĕр ĕмĕр ятлă манăн самана
Урайĕнче асам палли тĕрлет.

Çав паллăсен пĕлми вăрттăнлăхне
Вулас, пĕлес те ăнланас тесе,
Ăс-хакăлпа чĕрелĕх анлăшне:
Кашни сасса, кашни пайăр тĕсе

Чун витĕр сăрхăнтартăм пурнăçра.
Мĕскер ăнлантăм? Кам ăна пĕлет?
Ку пурнăç кĕрес çук нимле пуçа, –
Туй – ăс-халпа, пĕл – чĕрепеле!

Вара тинех урайĕнчи шевле
Сар чĕп пек тăрĕ, ӳсĕ куççăнах,
Çунат çине лартса – тӳпенелле –
Сана та илсе кайĕ чăн юмах.

Хăвна çӳлтен эс сăнăн. Аяла
Юлан кунсен асапĕ-суйине
Ăнланăн эс. Вĕсем – тусан майлах
Шевле çинче выляççĕ вăййине...

◆◆◆

Çут тӗнчи пире пӗрре,
Тӗл пулмастпӑр эпӗр:
Çичӗ хутлӑ тӗнчере
Çухалса çӳретпӗр.

Тен, сукмакӗ те пӗрре,
Вӑхӑчӗ пӗр виçӗм...
...Хутлӑхӗсем – тӗрлӗрен,
Тӗл пулайманниçӗм!

Пуранна чухне шанар,
Пур-ха пӗчӗк савӑк:
Манӑн хутлӑхӑм начар,
Лайӑхрах пуль – санӑн.

♦♦♦

Чăваш юрри хурлă (пурнăç пулнă – юрлă!)
Ырчĕ пулĕ чунăм ыратса-савса...
...Çурхи кун пек юрă, çут хĕвел пек юрă
Чĕрене уçайтăр юратса-савса.

Çĕнĕ ĕмĕр умĕ алкумне килсессĕн
Çĕн чăваш ачишĕн тепĕр çĕн инкек:
Юратма пĕлместпĕр, савăнма пĕлместпĕр,
Чĕресем шуралнă – чул айĕнчи пек.

Эпĕ – вĕренетĕп: кашни тухнă çулçă,
Кашни куçне уçнă вĕлтĕрти чечек
Кăмăлăма юсĕ, чун-чĕреме уçĕ,
Çĕр-шыва та савмăп найкăшуллă тек...

Эпĕ – вĕренетĕп: шăпчăк пур, тăри ман,
Чĕвĕлти чĕлхеллĕ чĕкеçсем те пур.
Юрласа ярсассăн – чăтайса тăраймăн –
Савăнма вĕренĕр – пулмăр вара хур.

◆◆◆

Ан найкăш: шанчăкăм – тусан,
Тӳрре тухмарĕ ĕненни...
Телей: пĕччеилĕхе туйса,
Пĕччеилĕхпе те киленни.

Ачашăн амăшĕ паха,
Маттур яшсемшĕн хĕр çиçет.
Ача та, яш та мар эп халь, –
Арçын – пĕччеилĕхре пиçет.

Тарман эп аслă тĕнчерен,
Тĕнче пек – хам та эп – пĕччен:
Чĕреçĕм ман – çуркуннерен,
Çуран, кĕртен, хĕлтен.
Тĕнчем!

♦♦♦

Тĕппипех, пусĕпех çĕтсен,
Çухатсан çăлтăрсен вутне,
Çеçен хир хĕррине çитсе
Эп тăвартăм юмах утне.

Умăмра пушă хир выртать.
Хыçăмра – кăлкан хумĕ кăна.
Ват йӳççи капланать пырта,
Тӳперен пăтрашу тăкăнать.

Илĕртетчĕ мана юмах.
Урхамахăм! Халь ирĕк эс – кай...
Эс мана парнелерĕн Сăмах,
Сăмахпа пĕрле – Тĕпсакай.

Пурнăç хăй – юмахран ытла!
Шел, юмахĕ тискер – çӳçенен.
Çеçен хир хĕрринче – улăпла –
Çупăрлатăп çилсен çилхине, –

Çак çилсем çăлăну парасла.

◆◆◆

Вăр-вăр çаварăнать çĕр чăмăр,
Вăрттăнлăхран шăтать калча...
...Пĕр ĕмĕр мар, эп çичĕ ĕмĕр
Кунланă çиччĕри ача.

Кунланă çеç-и, çĕр çĕрленĕ!
(Кĕрхи каçсен чаракĕ çук...)
Хăяматсен хура çĕленĕ
Чунна пăвсассăн – пул эс чул!

Каллех килет тĕнче талайĕ,
Каллех тепĕр тĕнче пĕтет.
Чун хытрĕ ан те, кăмăл вăйĕ
Çунаттуна тĕреклетет.

Ту çӳллĕш хум çĕре кисретĕ.
Хĕвел хуралĕ шупкаласа,
Çак ĕмĕр вĕçĕ – ват Эсрелĕ
Çӳрет йĕри-тавра кулса...

Вăл та иртет! Иртет, атьсемĕр!
Чунсем çеç юлĕç тасалса...
Чăваш пĕтмест, вăл – çичĕ ĕмĕр
Кунланă çиччĕри ача.

◆◆◆

Кӳлешех, текех шарламăп,
Ятлаçах чуну каниччен...
Мана ăмăрт кайăк вăрланă,
Никамăн та мар эп – пĕччен.

Мана ăмăрт кайăк вăрланă
Тӳпе куççульне пуçтарма.
Ак манăн уй-хир, ак вăрманăм,
Ак вутлă транттас-кустăрма.

Епле пит хавас та хăрушă!
Епле илĕртӳ те инкек...
Тӳпе тăрринче те пуш-пушă
(Хĕл умĕн хирти пушлăх пек).

Кулсам, ăмăрт кайăк вăрланă
Чĕреçĕм телей тупманран.
Хăрушă пулин те, хăрамăп:
Хăюлăх çăралчĕ юнра.

Кӳлешех, текех шарламăп,
Телей маншăн мар вăл, пĕлеп:
Мана ăмăрт кайăк вăрланă,
Никамăн та мар эп – поэт.

♦♦♦

Каçрăм ĕнтĕ хĕрĕх урлă
Çут çанталăк тĕпремĕ...
Мĕншĕн кирлĕ пулчĕ юрă?
Эп çавна та пĕлмерĕм.

Тем ятларĕç. Вăрçрĕç лайăх.
Урăхшăн ăш вăркарĕ.
Сенкер-кĕрен ăмăрт кайăк
Кун-çулăма вăрларĕ.

Пурнаймарăм çынсем евĕр,
Тен, пулас та килмерĕ.
Тӳпери тĕнче кĕрлевĕ
Сирĕлмерĕ, пĕтмерĕ.

Каçрăм ĕнтĕ хĕрĕх урлă
(Ĕмĕт – ача кулличчĕ...)
Хамшăн тесе хывнă юрă
Кăштах сирĕн пулинччĕ...

◆◆◆

Çумăр хыççăн кун тасалчĕ,
Уçăлчĕ тинех.
Сарă лĕпĕш пырса ларчĕ
Шур аллу çине

Вăрттăн. Тарчĕ вăл, хăравçă,
Тĕмĕ хушшине.
Çĕленсем шуса тухаççĕ
Хĕвел ăшшине.

Çĕленсем пире тивмеççĕ:
Пур та эпĕр – çук:
Çĕр çинчех питĕ çӳлте-çке
Юратуллă чух.

Кайăксем юрланăçемĕн
Пурнăç – çемĕллĕ.
Çумăр хыççăн – кун та çĕнĕ,
Чун та çĕнĕлле.

◆◆◆

Поэтсемшĕн чи чаплă вăхăт!
Çын тĕнчи тайăлать ăсран...
Шупка уйăх – типсе кайнă чăкăт –
Çутатмасăр тăрать кантăкра.

Пĕр сăмах та пулин хушинччĕ!
Пĕр сăмах та пулин каласам!
Çынпа уйăх хушши инçелчĕ,
Тĕссĕрленчĕ ытармăш асам.

Поэтсемшĕн чи чаплă вăхăт!
Лач! сураççĕ мана питĕмрен,
Куçĕсем епле типĕ те сăхă, –
Тĕксĕмрех чи хура тĕттĕмрен.

Уйăхпа калаçать ку, теççĕ,
Ку тăмсай, теççĕ, кайнă ăсран...
...Тĕттĕмре усалсем иртĕхеççĕ.
Ан çĕтер мана, уйăх, усра...

◆◆◆

Тĕнче хуçисем! Мухтанăр
Çынна çисе пухнă мулпа.
Пуян эпир – хамăр. Хамăр!
Куратăр-и? Ылтăн юпа.

Куçа курăнмасть-и? Пур вăл.
Май çук-и сутма-туянма?
Эй, пурнăçăм, пурнăçăм, пурнăç, –
Çав кирлĕ мана, айвана.

Юпам – тӳпене тĕлленĕ
Асамлă кĕтрет палли.
Тертпе эп ăна никĕсленĕ,
Нумай-ха ĕç-пуç ман валли:

Пухатăп сар ылтăн çутă
Сар çутă, çĕн уйăх çути.
Тĕнче хуçисем, ав, тутă,
Анчах пĕтнĕ пурнăç тути.

Çапла, иртĕхсе пынăçемĕн
Хӳтерĕр, хăвалăр мана:
Кашни тухакан çĕн çеммĕм
Çĕклет ылтăнах юпама...

◆◆◆

Çук, çăтаймасть мана вилĕмĕн авăрĕ,
Çук, тивеймест эсреметĕн туйи.
Тепĕр çавра – вара сывлăш та çавăрăп,
Тепĕр çавра – тен, сывалăп та-и.

Пуç çиййĕнчи пĕлĕтсен ырă кăмăлĕ
Ман кăмăла авăра парас çук.
Эпĕ путсан, манашкал çуттăн, çăмăллăн
Тек никамах та юрла пĕлес çук.

Тепĕр çавра – вара сывлăш та çавăрăп,
Тепĕр çавра – сыватса, çĕнетсе...
Ыр тунине ырăпа сире тавăрăп,
Эй, пĕлĕтсем, пĕлĕтсем, пĕлĕтсем!

♦♦♦

Пурте эпир сывă мар,
Курăр: çĕр-шывĕ чирлĕ!
...Эпĕр Турра кирлĕ мар,
Турă – пире – кирлĕ!

Ӳкĕнекен палăрмасть,
Çылăх каçарттармаççĕ.
Çавăрттарать çĕр арманĕ –
Шăмă авăртаканçă.

Мул та ларать пыра.
Çуклăх пушшех телейсĕр.
Чун чĕмлĕхне шырап,
Кун сĕмлĕхне тӳсеймесĕр.

◆◆◆

Ай, кăмăлăм килчĕ – юрлатăп
Сăмахсăр. Хăш чух – сăмахпа.
Çуран çӳреме юрататăп
Тусанлă тăван сукмакпа.

Эпир илемпе иленнишĕн,
Хĕвре тĕлкĕшнишĕн кăвар,
Эпир пурăнма пĕлменнишĕн
Никам та явапла мар.

Çуралнă эпир вут-кăварлă,
Чунсем те – тӳпе анисем.
Мĕн курнă эсир – васкаварлăн
Пуç çийĕн касса кайнисем?

◆◆◆

Тĕнче хуçисем эпир мар,
Çапах чун шăнмарĕ хĕлле.
Атя, çур кунне ырăлар,
Атя, ырăлар хĕвеле,

Çĕн уйăх сапан хĕлхемсем
Пĕрлешчĕр хирти çутăпа...
...Ачаш чĕрепех, хĕрхенсех
Иртет пире пӳрнĕ шăпа.

Чĕре – чĕре мар – пĕр суран,
Пăрпа касăлса пĕтнĕскер.
Тĕнчи пит хаяр – ху куран,
Эпир – пулаймастпăр тискер.

Хаяр тĕрекне ан ăмсан,
Вĕрен пурăнма çак хиртен;
Эпир те хăçан та пулсан
Хирти çутă пулăпăр, тен.

## ТУПМАЛЛИ

Хӗвелӗ хӑй те чӑтаймарӗ........................3
Хамашкал шӑхличчӗ........................4
– Пурнӑҫ ытла та лӑпкӑ........................5
Пурна киле хуллен, тен, манӗҫ........................6
Атте ман пулнӑ ҫӗнтерӳҫӗ........................7
Ӳкнишӗн ҫӑлтӑр – ҫӑлтӑрсем сӳнмеҫҫӗ.....8
Кашласа килсе кӗчӗҫ кӗрхи сив ҫилсем.....9
Ачаллах ӑсталанӑ тӗнчеҫӗм........................10
Кӑвар ҫинчи кӑвак пек ҫунтӑм........................11
Каллех ак тепӗр йӗр сӑн-питӗмре........................12
Ялтӑрти пурнӑҫ тинӗсӗ – анлӑ........................13
Пурӑнатпӑр, кун куратпӑр........................14
Ир учӗ тӗтрелӗх ӗҫӗ........................15
Урампа утса иртем те........................16
Эй, ҫутӑ ҫанталӑк!........................17
Ӑҫта каян, чӗкеҫӗм?........................18
Чӳрече умӗнчи мальвӑсем........................19
Эп тахҫан пӗр хӗре ӑсатсаттӑм........................20
Тӳперен анать-и хура ҫиҫӗм?........................21
Санпа калаҫрӑм эп харсӑрланса........................22
Шап-шурӑ, шап-шурӑ, шап-шурӑ........................23
Хура хӗвел хуллен сӳнет........................24
Таврӑнассӑм ҫукчӗ хам уҫланкӑна........................25
Ирхи шӑплӑх ҫӳҫенсе........................26

Кӗмӗл çутиллӗ хирсем – савӑнмалӑх.........27
Ӑш кӳтсе çитсессӗн, тӗттӗм хуçисем.........28
Çӗрлесерен шӑпчӑк юрри..........................29
Кӗркунне. Купӑста каснӑ вӑхӑт..................30
Юпаланать хура тусан...............................31
Сӗмлӗх ӑш-чикӗ: çитмӗл çич тӗслӗн.........32
Ырсассӑн ырлӑх хыççӑн çӳресе..................33
Çырлахтармарӗ умӑнта пурри....................34
Куç уçать, савӑнать... таптанать чечек......35
Ман иртнӗ кунӑмсем..................................36
Айӑплатпӑр пӗр-пӗрне...............................37
Сӑпайӑн, сап-саррӑн..................................38
Сарӑ çулçӑ пулнӑ сӑмахсем........................39
Турӑ çырни çапла вуланчӗ-шим?...............40
Ай, пурӑнмалӑх вӑй юлмарӗ!.....................41
Утӑ çулнӑ вӑхӑтри....................................42
Тӑнласан та – ӑнкараймӑн.........................43
Çав вӑрманах. Çав уй-хирех......................44
Kaç пулассине кӗтеттӗм.............................45
Çурхи шевле пуçна ӗнтӗркеттерӗ..............46
Тул çути саламӗ.........................................47
Ак ӳтленчӗ хура кайӑк..............................48
Тӗнче тени арканнӑ чух............................49
Савӑшу варкӑшлать шухӑша......................50
Кун-çул керменӗ пулчӗ тайлӑк...................51
Хавшать те малашлӑхӑн йӑлтӑр кӗрнекӗ....52

Мӗлке пек ҫӳренӗ чух..............................53
Пӗр выртса йӗрсе ярамччӗ..............................54
Чӳлмекри чечек хитре..............................55
Тасарах ҫӑлтӑрсен мерченӗ..............................56
Вӑхӑт иртсессӗн йӑлтах майлашать..........57
Те улшӑнтӑм, те ватӑлтӑм, те урӑх............58
Ҫут тӗнче сана юратрӗ..............................59
Ӑҫта талпӑнать-ши чунӑм..............................60
Туп та хушӑк, хӗсӗн те – тархасшӑн!........61
Утатӑп ҫапла: ҫухрӑмшар..............................62
Кӑвакарнӑ кантӑкран..............................63
Чечек чупрӗ улӑх ҫийӗн!..............................64
Ҫӗрле шурӑ тӗлӗк синкерӗ..............................65
Ан кала купӑсна, юлташӑм!..............................66
Тунсӑх пусӗ. Уя ҫитсе тухӑп..............................67
Ҫутӑ каҫӑн варне кӗвӗ-ҫемӗ тултарнӑ........68
Кивӗ пӳрт. Хуралтӑ. Кӗрт вулканӗ............69
Ҫеҫен хир вӑрмана тӑрӑнать..............................70
Чӑваш ҫӗр-шывӗ – юм хуранӗ..............................71
Ей-ей! Ку ҫӗр теме те курнӑ!..............................72
Ҫи-пуҫӑм манӑн ҫармӑсла..............................73
Ҫеҫен хир ҫилхине ҫил турать..............................75
Кун ҫути мӗнешкел паха та..............................76
Туйӑмсем кӑнтӑра вӗҫсе кайнӑ..............................77
Утмӑлтурат тӳпе сӑнне упрать..............................78
Мухтав сана, мӑнаҫлӑ Манӑҫу!..............................79

Ăнланманлăху – сăнран ӳкнĕ шур лантăш.....80
Çатăлти тирексем мамăкне вĕçтереççĕ.....81
Эп тăрап терĕн-им тӳпене çĕклесе?..........82
Аван уйăх вĕçĕн ăнсăрт çутă каçĕ............83
Ялтăртатать вăрман янтарĕ........................84
Тĕлĕкĕмрен вăрантăм-ха.............................85
Сарă кайăк пекех кăмăлăм.........................86
Шанчăксем пĕтсен те эпĕ упрăп...............87
Йăлтăр та йăлтăр сывлăм..........................88
Телей тухмасть. Тен, ыйтмаллаччĕ..........89
Нăрăсем, кăткăсем, шăрчăксем – Улăп, тен...90
Сывлăшĕ! Телей симпылĕ!........................91
Пуç çинче тăри çухалчĕ.............................92
Сар хĕвел çутипе вылямашкăн..................93
Мĕскер курмалла пулĕ ӳлĕм.......................94
Ĕмĕр вăрăм. Тата – кĕске.............................95
Пушă хирсем çунать тееççĕ.........................96
Шăплан, айван! Пуш хир – хаяр.................97
Кĕнеке шкапĕсем йĕп кăларнă....................98
Тĕнче пек сăввăм пур-и ман?.......................99
Хула шăв-шавĕ хыççăн – шăплăха.........100
Шурă чĕнтĕр çыхать улмуççи.....................101
Тĕттĕм, тĕттĕм тĕнчере.............................102
Шăпаçăм ман – Лаокоон............................103
Никам та курман çитмĕл çичĕ шевлеллĕ....104
Кансĕр каç сăпки.........................................105

Хир ачи – кĕтӳçĕ мар-и?..........................108
Пĕчĕк вăрман – хальлĕхе..........................109
"Юрату шевлийĕ", – терĕн..........................110
Сывламастăп ĕнтĕ хашшăн..........................111
Чупрăм ывăна пĕлмесĕр..........................112
Çут çанталăк кансĕррĕн çыврать..........................113
Самани çавнашкал халь – пăрăнăç..........................114
Пур унта... Сенкерлĕх ăсмалли..........................115
Эп çаврăнатăп авăрта..........................116
Епле çуталса, ялтравлăн..........................117
Кун-çулăмпа çураçрăм..........................118
Çумăр тумлать е куççуль?..........................119
Хут хуçлатнă та тунă, вĕçтернĕ..........................120
Чӳрече леш енче – урăхла самана..........................121
Ана çинче виççĕн вырĕç..........................122
Кĕпе аркине çĕклесе..........................123
Хĕрес çумне хĕрес..........................124
Халь иртрĕ тĕлĕннин сăлтавĕ..........................125
Тул çути сенкерĕпе..........................126
Пахча пуçне лартнă..........................128
Çул иртсе пынăçем çут çанталăк паха..........................130
Пушлăх хумханать çиллессĕн..........................131
Пурăнас та килет..........................132
Шур тĕтре каять те варсемпе..........................133
Çак-и ĕнтĕ ман телейĕм?..........................134
Чăн сăмах – чун сăмахĕ – тухать..........................135

Килсе кӗрет ҫурхи наянлӑх....................136
Аманнӑ чунӑма ҫунат пама....................137
Ҫут тӗнчи пире пӗрре....................138
Чӑваш юрри хурлӑ (пурнӑҫ пулнӑ – юрлӑ!)...139
Ан найкӑш: шанчӑкӑм – тусан....................140
Тӗппипех, пуҫӗпех ҫӗтсен....................141
Вӑр-вӑр ҫавӑрӑнать ҫӗр чӑмӑр....................142
Кӳлешех, текех шарламӑп....................143
Каҫрӑм ӗнтӗ хӗрӗх урлӑ....................144
Ҫумӑр хыҫҫӑн кун тасалчӗ....................145
Поэтсемшӗн чи чаплӑ вӑхӑт!....................146
Тӗнче хуҫисем! Мухтанӑр....................147
Ҫук, ҫӑтаймасть мана вилӗмӗн авӑрӗ.....148
Пурте эпир сывӑ мар....................149
Ай, кӑмӑлӑм килчӗ – юрлатӑп....................150
Тӗнче хуҫисем эпир мар....................151

Петер Яккусен
(Петр Яковлевич Яковлев)

Свет новой луны
Поэтический сборник
(на чувашском языке)

Художник Е.В.Енькка (Александрова)
Редактор Л.В.Егорова
Верстка Л.А.Наумов

Издательство «Клио»
428019, г. Чебоксары,пр.И.Яковлева, 15, к. 82
Подписано в печать 28.03.06. Заказ № 1/03. Тираж 250 экз.

Отпечатано в типографии ПБОЮЛ Л.А.Наумова
428019, г. Чебоксары,пр.И.Яковлева, 15, к. 82
E-mail: cliobooks@mail.ru

## Авторăн паллăрах кĕнекисем

***Ача-пăча прози:***

Кумаляк. Шупашкар, 1984.

2-мĕш кăларăм - Шупашкар, 2005.

***Поэзи:***

Тăм тăвайкки вăйййисем. Шупашкар, 1985.

Уй варринче. Шупашкар, 1987.

Юман чĕлхи. Шупашкар, 1990.

Çавра кӳлĕ. Шупашкар, 1993.

***Ăслăлăх:***

Чăваш фонетики. Вĕренӳ кĕнеки. Шупашкар, 1995.

2-мĕш кăларăм - Шупашкар, 2001.

***Куçару:***

Лука пĕлтернĕ Ырă Хыпар (Евангелие от Луки). Мускав, 1999.

Ырă Хыпар (Четвероевангелие). Мускав, 2001.

Ача-пăча Библийĕ (Библия для детей). Мускав, 2005.